**Наркотике хирĕçле шухăш çуратас тĕлĕшпе Элĕк, Улатăр, Йĕпреç, Комсомольски, Çĕрпӳ, Етĕрне, Елчĕк районĕсенче лайăх ĕçлеççĕ ● 3 стр.**


ХЫПАР

1997 çулхи кăрлачăн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

# Чăваш хĕрарăмĕ

48(814) №, 2013, раштав, 7

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электрон адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.



**Пĕрин пуçне çиет вăрçă, теприне пуйма пулăшать...** 2 стр.

**Кума – кумах, вилме памĕ...** 3 стр.

**Упăшки купăс калать, арăмĕ юрлать.** 5 стр.

**Качака туянтăм та...** 8 стр.

**Телейĕме 15 çул иртсен тупрăм.** 9 стр.

**Мунча чуна тасатать-ши?** 10 стр.

**Çăлтăрсем мĕнле пӳлĕмсенче çывăраççĕ?** 11 стр.





Алина ИЗМАН сăн ӳкерчĕкĕ.

## Атнарсен юмах тĕнчи

**"Ав çав кăтарту хăминчен пирĕн тăрăх пуçланать. Ăна эпир республикăра чи малтан вырнаçтартăмăр, – Атнар ял тăрăхĕпе çакăнтан паллашма тытăнтăм. Вырăнти администраци пуçлăхĕ Александр Кузнецов халăхпа пĕрле пурнăçланă ĕçсем пирки хавхаланса калама тытăнчĕ. – Çул хĕрринчи кашни чарăну патĕнче "нушник", çӳп-çап пăрахмалли савăт лартрăмăр, йăлтах сăрларăмăр. Асăрхăр-ха, çул хĕрринчи пĕчĕк вăрман епле таса, йывăççене акшарпа шуратнă".**

### Чун ыйтни

Шупашкартан Хĕрлĕ Чутая килекен ГАЗель чӳречинчен тинкернĕ май талккишпех хăрăк-харăк йăваланни, çӳп-çаппа тулса ларнă масарсем, пытармастăп, чуна хурлантарнăччĕ. Атнар тăрăхне çитсен урăх çĕр-шыва лекнĕнех туйăнчĕ. Хытхурапа витĕннĕ уй-хир, çӳп-çаппа тулнă çырмаçатра кунта кураймăн. Тасалăх – чи малти вырăнта. Çынсен пахчинче çум курăк ашкăрсан та ял тăрăхĕн пуçлăхĕ çийĕнчех асăрхаттарать-мĕн. Администраци çурчĕн умĕ те парк евĕрех. Çулла тĕрлĕ чечек ешерет, шыв сикки хĕвел шевлинче çичĕ тĕспе вылять. Хĕлле çав вырăна шурă мамăк айĕнче тĕлĕрекен туйăсемпе чăрăшсем илемлетеççĕ, Хĕл мучипе Юр пике кĕлеткисене куç ывăтмасăр иртеймĕн. Юмахри сăнарсене ăсталамашкăн пĕрремĕш юртанах кӳлепе тунă ĕнтĕ, вĕсене касса кăларĕç, сăрласа эрешлĕç.

Вунă çул каялла кăна-ха культура керменĕ тăрринчен шыв аннăран пӳлĕмсем сăнсăрланнă. Тахçан юхăнса ларнă çурта халĕ паллама та çук. Йăлтах юсанă, çĕнетнĕ. Фойере Александр Николаевич Тăван çĕр-шыв вăрçин паттăрĕсене халалланă нихăçан сӳнмен çулăма çутрĕ. Кунтах шыв сикки те шăнкăртатать, куршакра саркаланса çитĕнекен чечексем илем кӳреççĕ. Пӳлĕмре баян сасси илтĕнет. "Журналист килнĕрен ĕçлĕ курăнаççĕ тесе ан шухăшлăр, кашни кунах репетици ирттереççĕ", – шӳтлекелет хуçа. Геннадий Орлов ертсе пыракан халăх ятне тивĕçнĕ "Айхол" хора çӳрекенсем черетлĕ фестивале хутшăнма хатĕрленетчĕç. Атнар культура çуртне республика программипе усă курса 2009 çулта çĕнетнĕ. Патшалăх уйăрнă укçапа техника, сцена, артистсен костюмĕсем туяннă.

*Ăйăр та çапсан утми пулать.*

Каларăш.

## Çанталăк



| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 07.12 | - 3 | - 3 |
| 08.12 | - 5 | - 5 |
| 09.12 | - 5 | - 9 |
| 10.12 | - 12 | -14 |
| 11.12 | - 14 | - 6 |
| 12.12 | + 3 | + 1 |
| 13.12 | + 1 | - 9 |


**“Хыпар” Издательство çурчĕн кăларăмĕсене Раççей почтин мĕн пур уйрăмĕнче, çавăн пекех “Чăваш пичет”, “Советская Чувашия” киоскĕсенче тата редакцире çырăнтараççĕ. Хаксем – иртнĕ çулăн I çурринчи шайра.**

**“Чăваш хĕрарăмне” почта уйрăмĕсенче 239-22 тенкĕпе, киосксенче 213 тенкĕпе, редакцире 141 тенкĕпе çырăнтараççĕ. Индексĕ: 11515.**



ПУЛТАРУЛĂХ

# Пулас мăшăрĕ те сăмах хушма хăюлăх çитереймен



**«Телекуравра пĕрремĕш хут тĕл пулсанах юратса пăрахрăм Валентинăна. Мана ташлама чĕннĕччĕ, вăл кăларăм ертсе пыратчĕ. Ăна курсан, чăнах, çăвар карăлсах кайрĕ. Йăрăс кĕлеткеллĕскерне куç илми сăнарăм. Çапах ун чухне пырса калаçма хăюлăх çитмерĕ. Хам майлă çавăриччен кайран та çаврăнса пăхсах ăсататтăм. 1980 çулта çемье çавăртăмăр. Пĕр-пĕрне юратман мăшăр пĕрле пурăнаймасть. Уйрăлас шухăш нихăçан та çуралман. Тĕрĕссипе, 2-3 хут мăшăрланакансене хисеплеместĕп. Çын пур пĕрех хăйĕнчен нисĕта та тараймасть. Йăлт хамăртан килет вĕт», – мăшăрĕпе хăпартланса калаçать РФ культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Анатолий Музыкантов. Вĕсем икĕ ача пăхса çитĕнтернĕ. Халĕ мăнукĕпе йăпанаççĕ.**

**Çак кунсенче Чăваш халăх артистки Валентина Музыкантова хăйĕн юбилейне паллă турĕ. 40 çул ытла сцена çинче вăл: спектакльсенче вылянă, Правительство концерчĕсене ертсе пынă. Унсăр пуçне илемлĕ фильмсенче ӳкерĕннĕ, телекуравра, радиора ĕçленĕ.**

**«Эсир калăпланă пур сăнара та сире валлиех çырнăн туйăнать», – Валентина Ивановнăна саламланă май палăртрĕ ЧР культура министрĕ Вадим Ефимов. Чăнах, пурне асăнса та çитерейĕмĕн. Унăн иксĕлми пултарулăхĕ тавра нумай калаçрĕç уяв каçĕнче. Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕнче малашне те çĕнĕ рольсем калăплĕ вăл.**

### Чăн телей

Хăйĕн ĕçне чунран парăннă артисткăна хамăрăн тĕпеле чĕнтĕмĕр. Ĕç, çемье, пурнăç çинчен каласа кăтартма ыйтрăмăр.

**– Валентина Ивановна, калăр-ха, хĕрарăм телейĕ мĕнре?**

– Çемье ăшши, куç тулли ачасем, мăнуксем, юратнă ĕç пулсан хĕрарăм телейлĕ. Маншăн çемье те, ĕç те, сăнарсем те хаклă. Пурнăçра тĕрлĕ лару-тăру сиксе тухма пултарать. Чирлĕ ачасене килте хăварса театра васканă – халăх кĕтет-çке-ха. Хама аван мар туйсан та сцена çине тухнă. Ĕçе малти вырăна кăларнине кăтартать çакă. Çапах та ку çывăх çынсене сахалтарах юратнине пĕлтермест.

**– Çапах хăвăр калăпланă хăш сăнара палăртнă пулăттăр?**

– Кашни сăнара хăйне май юрататăп. Вĕсем ачасем пекех чуна çывăх. Пур артист та çапла калать. Пурте чĕрене кĕрсе юлаççĕ. Çав вăхăтрах хăшĕ те пулсан пĕлтерĕшлĕрех вырăн йышăнать. Тĕслĕхрен, Хветура рольне /«Сансăр пурнăç çук»/ ыттисемпе танлаштараймăн. Вăл – терт-асап вăхăтĕнче чăваш хĕрарăмĕн чунне кăтартакан сăнар. Амăшĕ вăрçăра ывăлне çухатнă. Çапах тĕпренчĕкĕ ахаль вилменнине пĕлет Хветура. Унăн ачи халăхшăн, тăван çĕр-шывшăн пуçне хунă. Çакă хурлантарать те, мăнаçлантарать те ăна. Çак сăнара мана шанса панăшăн Вячеслав Оринов режиссера ĕмĕрĕмĕр тав тăватăп. Халĕ те тĕл пулусенче, уяв каçĕсенче Хветура ролĕпе сцена çине тухатăп. Мăшăр ертсе пыракан «Сувар» ушкăнăн «Ăсату» ташă пур. Çак композиципе шăпах «Сансăр пурнăç çук» спектакль сыпăкĕпе илемлететĕп, пуянлататăп.

Театртан каяс килмест. Мĕнле уйрăлмалла унпа – пĕлместĕп. Сывлăх пулсан малалла та ĕçлесчĕ.

**– «Кĕпер» илемлĕ фильмра эсир Андриян Павлов артиста юхан шыв урлă йăтса каçаратăр. Эсир çав тери вăйлă-и?**

– Йăтнă ĕнтĕ... Çамрăк чухне пушшех ларса канма та вăхăт пулман. Театрта ĕçленĕ вăхăтрах диктора вырнаçнă. Пуçлăхсем артист ĕçне пăрахма та сĕннĕччĕ, анчах манăн театртан уйрăлас килмерĕ. Телекуравра, радиора нумай кăларăм хатĕрленĕ. Петр Андреев редактор микрофонпа ĕçлеме нумай вĕрентрĕ. Василий Павловпа «Ăраскал» кăларăм ертсе пыма пуçларăмăр. Çыравçăсемпе сăвăçсен хайлавĕсене пĕрмай вуланă. Ĕçе юратни пур йывăрлăха та çĕнтерме пулăшнă.

### Самана хăйне евĕрлĕхĕ

**– Хальхи çамрăксем спектакле çӳрес вырăнне компьютер умĕнче ларни сисĕнет-и?**

– Халĕ пурнăç урăхла. Çамрăксем Интернета кĕреççĕ, телевизор пăхаççĕ, каçхи клубсене çӳреççĕ. Театра килекен сахалрах. Малтан халăх спектакле билет илме урамран тăратчĕ. Çавăн чухне артистсемшĕн çав тери илемлĕ вăхăт пулнă. Паян укça малти вырăнта. Театра çӳременшĕн çамрăксене айăплас та килмест. Укça ĕçлесе илес тĕллевпе инçе çĕре те тухса кайма тивет вĕсен. Пире черет çитсен хваттер панă. Вĕсен хăйсен пурăнмалли кĕтес туянас пулать. Шеллес те килет çамрăксене. Мĕн тăвăн – самана улшăнчĕ.

Эпĕ шăпана ӳпкелеместĕп. Пултарулăх çулĕпе утма пĕрре те йывăр пулман.

**– Гастрольсенчи пăтăрмахсем ĕмĕрлĕхех асра юлнă ĕнтĕ.**

– Ялти клуба кĕрсе тухма çăмăл пулман. Ĕлĕк çулсем япăхчĕ. Çумăр çусан пылчăк çĕрăлатчĕ. Çавăнпах гастроле резина атăсăр кайман. Транспорт лаксаларатчĕ те пурте – арçынĕ, хĕрарăмĕ – автобус тĕкме тухаттăмăр. Шăрăхра тусан çăвара кĕретчĕ.

Пĕрре çапла ял варринчех чăнкă çырма урлă каçмаллачĕ. Кĕпере темшĕн сӳтнĕ те ун вырăнне хăма хунă. Пирĕн çаврăнса каялла кайма юраман – клуба спектакль выляма çитмеллечĕ. Тахăш самантра пирĕн автобус тайăлма пуçларĕ, юрать-ха водитель газ пусма ĕлкĕрчĕ. Пирĕн хыççăн вара хăма ӳксе юлчĕ.

### Пĕр-пĕрне ăнланни

**– Хăвăр, мăшăр, хĕрĕр пĕр культура керменĕнче тăрăшатăр. Чи çывăх çынсем юнашар пулни ĕçре пулăшать паллах.**

– Эпир пĕр-пĕрне ăнланатпăр, пулăшса пыратпăр. Мăшăрăмпа иксĕмĕрĕн кĕвĕçесси шухăшра та пулман. Эпĕ, сăмахран, Анатолий Музыкантов ертсе пыракан «Сувар» ушкăн ташшисене пĕлетĕп. Тĕрĕссипе, манăн пур ĕçе те тĕплĕ тăвас килет.

**– Мĕнле тата ăçта канатăр?**

– Малтан çулла икшер уйăх гастрольте çӳреттĕмĕр. Киле таврăнсан çемьепе пĕрле пулас килнĕ. Отпуск вăхăтĕнче Елчĕк районĕнчи тăвансене пулăшма васканă. Пĕрре çемьепе кану çуртне кайнăччĕ. Унта шавлаççĕ, кăшкăрашаççĕ – йĕркеллĕ канни пулмарĕ. Çавăнпах пĕр эрне малтан тухса килтĕмĕр. Килте темрен лайăх.

**– Сирĕн кĕлеткене кирек кам та ăмсанса пăхĕ. Эсир уйрăм диетăна пăхăнатăр-и?**

– Сывлăхшăн сиенлĕ апат кăна çимен. Каçхи 6 хыççăн та апатланмасăр пурăнман. Организм хăйне евĕрлĕхĕпе çыхăннă пуль çакă.

### Кушак та ачашланасшăн

**– Чун киленĕçĕ çинчен пĕлес килет.**

– Çемйипех кушак юрататпăр: килте те – виççĕ. Пĕрне мăшăрпа хĕрĕм Пермьрен илсе килчĕç. Виçĕ тĕслĕхскерне урамра тупнă вĕсем. Шăнса кӳтнĕ кушак урине сĕтĕрсе утнă. Ăшă пӳлĕме илсе кĕртнĕ, çитерме ăна. Теприне ĕçрен илсе кайрăмăр. Выçса çитнĕччĕ вăл. Малтан апат курманла çиетчĕ. Виççĕмĕшне Ирина урамра асăрханă. Куçĕ пӳрленме пуçланă унăн. Хайхискер аслă çул урлă чупса каçма хăтланнă. Машина таптаса каясран шиклене хĕрĕм кушака алла илнĕ. Кайран ăна та урамра хăварман.

Культура кермене кушаксем час-часах иленеççĕ. Вĕсене те, урамрисене те çитерсе тăратпăр. Килсĕррисене вăхăтра апат памасан чун ыратать. Кушаксене хамăр шутранах стерилизацилетпĕр.

«Чăваш халăх артисчĕ вĕт эсĕ, урамри кушаксене çитерсе çӳренĕ чухне хăвна аван мар туймастăн-и?» – текен те пур. Усал ĕç туни мар-çке вăл. Чĕрĕ чуна епле шеллемĕн?

**– Чуна уснăшăн тав, Валентина Ивановна.**

**Марина ТУМАЛАНОВА калаçнă.**

ПРЕМЬЕРА

# Вăрçă тăрантарать ăна

Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕн репертуарĕ çĕнĕ спектакльпе пуянланчĕ. Куракансем Бертольт Брехт пьеси тăрăх лартнă «Кураж инкепе унăн ачисем» ĕçе хак пама пултарчĕç. Ăна РФ Культура министерствин грантĕ сцена çине кăларма пулăшрĕ. Ку спектакле урăх регионтан чĕнсе илнĕ пултарулăх ушкăнĕ хатĕрленине палăртмалла. Вĕсем – Пушкăртстан искусствăсен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Айрат Абушахманов режиссер /Ĕпхӳ/, А.П.Чехов ячĕллĕ МХТ шкул студийĕнче пĕлӳ илнĕ Александра Ефимова художник /Чул хула/, Ильшат Яхин композитор /Ĕпхӳ/ – яланлăхах Çамрăксен театрĕн историне кĕрсе юлчĕç.

Хальхинче куракансем валли сцена çинче вырăн хатĕрленĕ. Вĕсем кунти ĕç-пуçа тӳрремĕн хутшăнаççĕ тейĕн. Кураж инке те халăх хушшинчен тухать...

Аса илтеретĕп, ку спектакле нимĕç драматургĕ Анна Фирлинг çемйин историне тĕпе хурса çырнă. Çак хĕрарăма вăрçă услам тума пулăшнă. Ал айне лекнĕ пур япалана та сутма хăтланнă вăл. Вилнĕ салтак çи-пуçне хывса илме те имемнен. Унсăр пуçне çар çыннисене эрех, хĕç пăшал, апатçимĕç сĕннĕ. Икĕ ывăлĕпе чĕлхесĕр хĕрне пĕр вырăнтан тепĕр çĕре куçарса çӳренĕ амăшĕ. Пуля айĕнче çитĕннĕскерсен шăпине хĕрарăм хăй татса панă тесен те йăнăш пулмĕ. Пĕве кĕнĕ ывăлĕсене хăйĕнчен уйăрасшăн пулман Кураж инке. Çавăнпах вĕсене, вăрçă кайма пуçтарăнакансене, улталама тĕв тунă хайхискер. Тĕпренчĕкĕсене карт турттарнă хĕрарăм. Кашнин çине хура хĕрес – вилĕм палли – ӳкернĕ. Кураж инкен ачисем пурнăçран вăхăтсăр уйрăлни ыт ахальтен мар – амăшĕн çапла хăтланмалла пулман. Пĕтĕмĕшле илсен, Бертольт Брехт XVI ĕмĕрте вăтăр çул пынă вăрçă терт-асапне кăтартнă.

Çапах Кураж инке мĕнлерех хĕрарăм-ши? Виçĕ пепкине виçĕ салтакран çуратнă вăл. Ачисен ашшĕсем вилнĕ е хыпарсăр çухалнă. Тахçан çывăх пулнă çыншăн кулянса куççуль кăларакансен йышĕнчен мар вăл. Кирлех пулсан урăх арçынна та хăй майлă çавăрĕ, унпа йăпанĕ.

Вăрçа пула тăр пĕччен юлать хĕрарăм. Апла пулин те мирлĕ пурнăçа хирĕç усламçă. Уншăн малтанхиллех укça тăвасси малти вырăнта. Вăл çак ĕçпе тăранса пурăнма хăнăхнă.

«Классика – яланах чĕрĕ, паянхи пурнăçпа çывăх. Çавăнпах ку спектакле хальхи сĕм кĕртме тăрăшмарăмăр», – çирĕплетет Айрат Абушахманов. Чăваш артисчĕсемпе ĕçлеме килĕшнине палăртать режиссер. «Вĕсем йăнăшсран хăрамаççĕ, шыраççĕ, тепĕр майлă выляса пăхаççĕ – çакă нимрен хаклă. Çамрăксен театрĕн чĕрĕ, çаврăнăçуллă пулмалла», – çирĕплетет Ĕпхӳ хăни. Пушкăртстанра, Чăван Енре, Тутарстанра спектакльсем хатĕрленĕ хыççăн çакнашкал пĕтĕмлетӳ тунă вăл: наци театрĕн артисчĕсен уçă кăмăллăрах, чунĕпе çут çанталăка çывăхрах.

Кураж инкене вылякан ЧР тава тивĕçлĕ артисткипе Ирина Архиповăпа спектакле мĕнле хатĕрленни тавра калаçрăмăр. «Эпĕ ку ĕçе çулла пĕччен тишкернĕччĕ. Манăн çакăнта чăваш хĕрарăмĕн хăш-пĕр енне кăтартас шухăш та пурччĕ. Анчах режиссер çакна ырламарĕ. Çавăнпа çĕнĕ сăнар калăплама тӳрех çăмăлах пулмарĕ-и тен. Кайран режиссерпа иксĕмĕр пĕр чĕлхе тупрăмăр. Вăл мана хытă чунлă пулма вĕрентрĕ. Кураж инке савăнма та, юратма та, инкеке никама кăтартмасăр ирттерсе яма та пĕлет – çакна йăлт чун витĕр кăлармалла паллах. Куракансем çывăхра ларнăран пушшех туйăмсене пытараймăн», – ăнлантарать вăл. Репетици вăхăтĕнчи хăшпĕр самант спектакльтен тухса ӳкнине асăрхарăм. Çакăн сăлтавне те пĕлес килчĕ. «Ку пьесăна антрактсăр вылярăмăр. Вăрăма тăсăлса каясран спектакле кĕскетме лекрĕ. Тĕслĕхрен, поварпа Кураж инке хушшинче çуралнă юрату сыпăкне кăлартăмăр», – тет Ирина Архипова. Спектакле çавнашкалах ЧР тава тивĕçлĕ артисчĕ Александр Степанов, Николай Дмитриев, Николай Тарасов, Ольга Мацуцына, Любовь Васина, Владимир Свинцов... хутшăнаççĕ.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**

САМАХ ПАРĂР-ХА

# Кума – кумах, вилме памĕ...

Маргарита ИЛЬИНА

**Темиçе çул каялла Хĕрлĕ Чутай районĕнчи синкерлĕ пулăма тĕрĕслемешкĕн командировкăра пулни асра ĕмĕрлĕхех çырăнса юлнă. "Васкавлă пулăшу" машини вăхăтра çитменнине пула хĕрарăм вилсе кайнăччĕ унта. Хĕрĕ чун ыратнине нимĕнпе те пусарайманнине пула хаçатçăсем патне килнĕччĕ. Аннерен хакли кам пултăр? Ăна ĕнтĕ чĕртсе тăратма май килмесен те айăплисене явап тыттарма ыйтнăччĕ çамрăк хĕрарăм, хăй те амăшĕ ятне илтсе ĕлкĕрнĕскер. Шăпах çак сăлтавпа çула тухнăччĕ те. Чăн та, каярахпа çав хĕрарăма çапах та больницăна илсе кайнă-ха, анчах та тухтăрсем нимĕнпе те пулăшайман, инкеке лекнĕскер сывлама пăрахнă. Синкерлĕ ĕç-пуçа тĕпченĕ май лару-тăру уçăмланчĕ. Машинăна районти тепĕр яла чĕнсе илнĕ иккен – унта пурăнакан çыннăн... хăлхи ыратнă. Специалист пулмасан та, ним чухлĕ те иккĕленместĕп – çав çыннăн ятарлă машинăна чĕнмелĕхех сăлтав тупăнманах. Ахăртнех, хăлхи те унăн çав каç кăна ыратма пуçламан-тăр. Эпир "хăех иртсе каясса шанса" нумай чухне чăтма хăнăхнă вĕт. Хытах ыратма пуçлсан вара хайхи "Васкавлă пулăшăва" чĕннĕ ĕнтĕ. Аван вĕт: больницăна кайса черет тăрса аппаланмалла мар. Çав вăхăтра, тен, тухтăрсен пулăшăвĕ кама-тăр чăнласах васкавлă кирлĕ пулни пирки вара шухăшламастпăр та. Ĕç-пуç инкекпе вĕçленнĕ авă: ачисем – амăшĕсĕр, арçын ватлăхра хăрах çунатпа тăрса юлнă...**

**Больница тĕп врачĕпе тĕл пулса калаçмашкăн сыватмăша çитсен малтан çак çурта пăхса çаврăнтăм ун чухне. Тӳрех каламалла, манăн унта сипленес шухăш çуралмарĕ – тухтăрĕсем те, сыватмăшăн юсав ĕçĕсене тахçанах "курман" стенисем те нимĕнле шанчăк та кӳмерĕç. Реанимаци уйрăмне такам та ирĕклĕнех кĕме пултарни тĕлĕнтерчĕ. Ăна çӳлти хута вырнаçтарни вара пуçа шăнăçмарĕ – чунĕ кĕç-вĕç тухас патне çитнĕ çыншăн кашни самант хаклă, ăна хăвăрт кăна пĕрремĕш хута илсе кĕрсе реанимаци ĕçĕсене пуçлас вырăнне вара наçилккапа çӳле сĕтĕрмелле. Çынни, çемçен каласан, пит йăрăсах мар тăк тата?.. Лифт пулсан ку сăмаха пуçлани вырăнсăрччĕ-ха та...**

**Çав статья пичетленсе тухнă хыççăн районтан тата темиçе çăхав та килчĕ – тухтăрсен кăнттамлăхĕ, ĕçе çиелтен пурнăçлани пирки. Шурă халатлисем хăйсен чысне хӳтĕлеме пăхрĕç-ха та, анчах та çырусене вырăна тухса тĕрĕслени пирĕн вулакансен шухăшне çирĕплетрĕ кăна.**

**Унтанпа темиçе çул та иртрĕ. Хĕрлĕ Чутай больницинче, ертӳçĕсĕр пуçне, мĕн те пулин улшăннă-ши – калаймастăп. Анчах та паян сăмах пуçарни вĕсене тепĕр хут тустарас тенипе пачах та çыхăнман. Ытти районта та лару-тăру вĕсеннинчен тĕпрен урăхла тесе никам та калаймĕ. Пур çĕрте те – пĕрешкелех. Сывлăх сыхлавĕ пирки ӳпкелешсе калаçнине тăтăшах илтме пулать. Шалăва ӳстерсе пыни те пулăшмасть курăнать. Пурнăçра темĕн те сиксе тухать. Экстремаллă лару-тăрура ниме пăхмасăр чи малтан çын пурнăçне çăлма васкамалла – çакна саккунрах палăртнă. Çĕрпӳ районĕнче пулса иртнĕ тĕслĕх чуна çӳçентерет. Палкаса юн юхакан çынран чи малтан страховка полисне ыйтнă унта. Арçыннăн çумра пулман вăл. Юрать, Çĕрпӳ хуларан инçех мар та, хытă суранланнăскерне юлташĕ машинăпа Шупашкара илсе çитернĕ. Энгельс урамĕнчи травмпунктра хайхискерне пĕр тăхтаса тămасăр йышăннă. Çавна май Чул хула облаçĕнче пулса иртни аса килчĕ. Аптраса ӳкнĕ чăваша, шапашкăра вăй хураканскерне, тухтăрсем ним ыйтса тămасăр хăвăртах операци сĕтелĕ çине вырттарнă. Полис мĕнле-ха вара? "Кайран, кайран!" – алă сулнă шурă халатлисем... Чăнах та, мăшăрĕ кайран факспа кăна ярса панă.**

**Мĕншĕн аса килчĕç-ха каллех шурă халатлисем? Нумаях пулмасть пĕр районтан çитнĕ усал хыпар шухăша ячĕ – "Васкавлă пулăшу" машини вăхăтра çитейменнине пула – каллех! – кĕске вăхăтра виçĕ çын чĕри тапма чарăннă. Ертӳçĕ пуканне йышăнакансем кун пек чухне тӳрĕ сăмахран пăрăнма тăраççĕ, лару-тăрăва уçăмлатмашкăн çавăнпах шанчăклă çăл куçсемпе çыхăнтăмăр. /Асăннă синкер пирки прокуратура ĕç пуçарнă, çавăнпа районне хальлĕхе палăртас мар терĕмĕр/. Вулакан каллех шурă халатлисене айăпласса кĕтет пулĕ те, анчах та хальхинче вĕсене сăмах лектерме сăлтав çук пек туйăнать. Район шайĕнчисене. Юлашки вăхăтра "оптимизаци" текен ăнлав пурнăçа çирĕп кĕрсе вырнаçрĕ. /Хамăр та, хаçатçăсем, çак процедура витĕр тухрăмăр та ним ырри те асăрхамарăмăр унта/. Тăкаксене пĕчĕклетес тĕллевпе штата кĕскетсе вăйсене пĕрлештерни ырри патне илсе çитерменни куç кĕрет. Шалу та, пурнăç шайĕ те ӳсмест... Пачах тепĕр май, туххăмра виçĕ çын пурнăçĕ татăлнă авă ку тĕслĕхре. Статистикăра çырăнса юлнă "виççĕ" цифра хыçĕнчи чун ыратăвне, çывăх çыннисене çухатнă çемьесен кулянăвне вара мĕнпе виçмелле-ши? Çирĕм пине яхăн çын пурăнакан район "çӳлтисемшĕн" пĕчĕк пек курăннă иккен. Апла – "Васкавлă пулăшу" пĕр машини те çитет... Апла – пĕр бригада чухлĕ оптимизацилес. Çапла вара пĕр машина республикипех чупма пуçланă. Мĕншĕн республикипех-и? Ара, оптимизаци пирĕн пурнăçра тахçанах вăй илнĕ. Малтанах юн тымарĕсен чирĕсемпе аптракансен центрне кӳршĕ районта кăна хăварчĕç. Инфаркт, инсульт пулас тăк каллех кашни самант хаклă, анчах та аптраса ӳкнисене Çĕмĕрлене турттарма тивет. Пĕлĕшĕмĕн амăшĕ, пуçне юн кайнăскер, шăпах вăхăтра пулăшайманнипе вилсе кайрĕ. Кун пек тĕслĕх эпир пĕлменни тата нумай пулни пирки пĕрре те иккĕленместĕп. Чаплă йышши оборудованипе тивĕçтернĕха ĕнтĕ центра, анчах та унта çитмелле вĕт-ха. Çав районта ача çуратмалли çурт та çук халĕ /республика Пуçлăхĕ кашни утăмрах демографи ыйтăвне хускатать те, мĕнле чунпа итлеççĕ-ши ăна унти хĕрарăмсем?/. Патне çитсен пулас амăшĕн ăçта кайса кĕмелле-ши? Калăпăр, районта виççĕн харăс аптранă: пĕрин тăрук чĕри чăхăмлама пуçланă, теприн пепки çут тĕнченеваскать, виççĕмĕшĕн кĕтмен çĕртен аппендицита пула хырăмĕ касса ыратма тытăннă. "Васкавлă пулăшăвĕ" вара – пĕрре кăна. Ăçта кайса кĕмелле шурă халатлисен? Паянхи кунпа тан пырас тесен, тен, çак уйрăмра ĕçлекен тухтăрсене кума тумалла? Кума – кумах, вилме памĕ...**

ПИЧЕТ ИСТОРИЙĔ

# Тĕпел кукринчен тухнă тапхăр

**2013 çулхи чӳк уйăхĕнче «Ĕç хĕрарăмĕ» журнал тухма пуçланăранпа 85 çул çитрĕ. Унăн пĕрремĕш номерĕ Шупашкар хулинче 2000 экземплярпа кун çути курнă.**




Вăл чăваш хĕрарăмне тĕрĕс çул çине тухма пулăшакан, ыррипе усаллине уйăрма вĕрентекен, партипе правительство йышăнăвĕсене тĕплĕ çутатса пыракан журнал пулнă. Çак кăларăм уйăхра пĕрре пичетленнĕ.

Кĕнеке палатин ылтăн çӳпçинче журналăн пур номерĕ те типтерлĕ упранать. Сарăхса кивелнĕ страницăсене тишкернĕ май çав вăхăтри пурнăç куç умне яр уççăн тухса тăрать.

Хаçат парти обкомĕ чăваш хĕрарăмĕсене чĕнсе каланипе уçăлать. Унта çак йĕркесем пур: «Çапах та патша вăхăтĕнче пуринчен ытла хĕсĕкре, тĕттĕмре пурăннă хĕрарăм арçынран юлса пырать. Пирĕн чăваш хĕрарăмĕ татах та каярах юлнă. Вĕсен культура шайне хăпартасси, ĕçе хутшăнтарса пырасси – пысăк ĕç. Парти чăваш обкомĕ «Ĕç хĕрарăмĕ» журнала кăларни хĕрарăмсен культурине хăпартма, ĕçе хутшăнса пыма, ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме пулăшĕ. Вăл журнала вулăр, çырăр, сарăр!»

Çакăнтах редакци ĕçченĕсем сăмах илнĕ. Вĕсем журнал мĕнлерех пулассине палăртнă, арçынсене çывăх çынсене çак кăларăма çырăнса пама ыйтнă. Чăваш халăх сăвăçин Петĕр Хусанкайăн сăвви те вырăнлă:

«...Аппасем, йăмăксем, инкесем,
Тухăр, тухăр тĕпел кукринчен!
Çĕр çинче пит нумай-ха кĕсен,
Пайтах сип вăл кĕтет сирĕнтен.

Малалла ăнтăлни тĕнчере
Пуринчен те паха, пуринчен.
Йĕччĕрех сӳретке-кĕнчеле,
Тухăр, тухăр тĕпел кукринчен».

«Хĕрарăмсене пурнăçа юсама вĕрентет» корреспонденци те хăйне май кăсăклă. Унта Тутаркас /Муркаш/ районĕнчи Москакасси ялĕнче пурăнакан Кĕркури Ульхи пирки çырса кăтартнă. Çуркунне вăл 12 çухрăмри Кашлăх ялне пахча çимĕç ӳстернине курма кайнă. Унтан таврăнсан юлташĕнчен 3 пăт çурă йĕтĕн вăрри кивçен илсе акса хăварнă. Кĕркунне вара Ульха йĕтĕн вăррипе сӳс сутса 75 тенкĕ услам тунă. Вăл пухусенче ял хуçалăхне мĕнле майпа аталантармалли çинчен тăтăш калаçнă. Çакна шута илсе ăна ял канаш членне суйланă.

Журнал ĕçченĕсем кашни номере кăсăклăрах тума тăрăшни куç умĕнчех. Статьясене тĕрлĕ рубрикăпа пичетленĕ. «Çĕнĕ пурнăç тăватпăр» рубрика уйрăмах вăхăт таппипе тан пынине çирĕплетет. Унта ĕç артелĕсен çитĕнĕвĕсене кăтартнă, сăн ӳкерчĕксем вырнаçтарнă.

Ялти улах пирки вуласа пĕлме май пур. Хĕрлĕ Чутай районĕнче 63 çĕрте хĕрлĕ улаха пуçтарăннă. Хĕрарăмсем ал ĕç тунă, кĕнчеле арланă, кĕнеке-хаçат вуланă, ташлама-юрлама вĕреннĕ.

Хастар хĕрарăмсемпе паллаштарать журнал. Тĕслĕхрен, Етĕрне райĕçтăвком председателĕ Михеева халăха çутта тухма пулăшни çинчен тĕплĕ çырса кăтартнă.

Сĕнӳ-канашпа пуян «Ĕç хĕрарăмĕ». «Данилов тухтăр канашĕсем», «Ыйтусемпе хуравсем», «Усăллă канашсем», «Ача-пăчана мĕнле пăхмалла?» ятарлă страницăсем кил хуçи арăмĕсен пурнăçне çăмăллатма пулăшни иккĕлентермест.

Журнал чăваш çыравçисемпе, сăвăçисемпе тачă çыхăну йĕркеленĕ. Уйрăмах М.Трубинан, В.Краснов-Аслин, Г.Краснов-Кĕçĕннин, А.Алкан, П.Хусанкайăн, Н.Полоруссов-Шелепин, Л.Агаковăн, В.Алагерăн, А.Петоккин, И.Ивникăн хайлавĕсем тăтăш пичетленнĕ. Сăмах ăстисем хăйсен сăввиюрринче хĕрарăмсене малалла талпăнма йăхравланă.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçлансан вулакансен журналпа сыв пуллашма тивнĕ. Вун тăватă çулта 148 номер пичетленме ĕлкĕрнĕ. Редакторĕсем А.Григорьева, И.Разумова, А.Токсина, Е.Ванеркке, Е.Орлова, М.Чупракова, М.Юрьев, А.Митрофанова пулнă.

Çак журнал чăваш пичетĕн историйĕнче тарăн йĕр хăварнă. Унăн ĕçне халĕ «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçат малалла тăсать.

**Елена АРЛАНОВА,**
**Кĕнеке палатин тĕп библиографĕ.**

ЛАРУ

# Наркăмăш çулне пӳлнĕ

Паянхи кун тĕлне республика территорийĕнчи тĕрмесенче наркотика пула 1471 çын ларать. Вĕсенчен 60-шĕ – ют çĕршывран килнисем, 10-шĕ – гражданствăсăр, 879-шĕ – хĕрарăмсем, СПИД вирусĕ ернисем – 257-ĕн. Çĕрпӳри 7-мĕш сиплевпе юсану учрежденийĕнче айăпне 739 хĕрарăм каçарттарать, вĕсене унта наркомани тата алкоголизм серепинчен хăтăлма пулăшаççĕ. Çакăн пирки наркотике хирĕç кĕрешекен комиссин анлă ларăвĕнче федерацин айăплавсене пурнăçа кĕртес енĕпе ĕçлекен Чăваш Енри службин управленийĕн пуçлăхĕ Алексей Нецкин каласа кăтартрĕ. Раштавăн 4-мĕшĕнче Правительство çуртĕнче иртнĕ ларăва ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ертсе пычĕ.

Кирпĕч шутлакансем патне кăçалхи 11 уйăхра «шурă вилĕм» илсе пынă 8 тĕслĕх тупса палăртнă, 6-шĕн тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă. Пурĕ 1 килограмм ытла наркотик хутăшĕ туртса илнĕ. «Айăпланнисем патне наркăмăш çитмен», – пĕлтерчĕ Алексей Алексеевич.

Культура шайĕ ӳсни, вăхăта усăллă ирттерме май пурри çамрăксене усал шухăшран пăрать. Халĕ кашни районта физкультурăпа спорт комплексĕ хута кайрĕ, культура çурчĕсене çĕнетес ĕç те малалла пырать. «Республикăра пурĕ 786 клуб, патшалăх программипе килĕшӳллĕн 2008 çултанпа 84-шне çĕнетнĕ. Çавна май мероприятисемпе кружоксен шучĕ ӳсрĕ. Обществăра наркотике хирĕçле шухăш çуратас тĕллевпе кăçал пурĕ 160 мероприяти ирттернĕ. Уйрăмах Улатăр, Элĕк, Йĕпреç, Комсомольски, Çĕрпӳ, Етĕрне, Елчĕк районĕсенчи культурăпа кану учрежденийĕсем тухăçлă ĕçленине палăртмалла», – асăнчĕ ЧР культура министрĕ Вадим Ефимов.

«Мероприяти йĕркелени лайăх, çапах та вĕсен витĕмлĕхĕ иккĕлентерет: çул çитменнисен хушшинче наркотикпе айкашакансен хисепĕ ӳссе пынине кăçал та асăрхарăмăр», – палăртрĕ комисси председателĕ, федерацин наркотиксен çаврăнăшне контрольлекен службин республикăри управленийĕн ертӳçи Евгений Барсуков.

Республикăра ял хуçалăхĕн ăслăлăхпа тĕпчев институчĕ /3 гектар/ тата Çĕрпӳ районĕнчи пĕр предприяти /40 гектар/ промышленноçра усă курмашкăн кантăр çитĕнтереççĕ. ЧР ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов палăртнă тăрăх – асăннă культурăри сортсенче çын организмĕшĕн сиенлĕ хутăш нормăран пĕчĕк. Пĕлтĕр Улатăр районĕнчи Ичикс ялĕнче хăйне тĕллĕн ӳсекен кантăр тупса палăртнă, кăçал ун йышшисене асăрхаман.

**Алина ИЗМАН.**



АПТРАМАН ТАВРАШ

# «Мӑнукӑм – ҫывӑх тусӑм»

**Юлашки вӑхӑтра ялсенче те ача-пӑча валли вӑйӑ лапамӗсем йӗркелеме пуҫларӗҫ. Ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсем заводра хатӗрленӗ тимӗр ярӑнчӑксене туянса вырнаҫтарнӑран вӗсем пӗр-пӗринчен питех уйрӑлмаҫҫӗ. Вӑрмар районӗнчи Шӑхаль салинче тӗп урампа утнӑ чухне тӑкӑрлӑкри хайне евӗр тӑвайкки куҫа илӗртнӗрен ҫав кил хуҫипе паллашмасӑр чун чӑтмарӗ.**

**Пысӑк та хӑтлӑ, хитре пӳртре нумай ачаллӑ ҫамрӑк ҫемье пурӑнасса шаннӑччӗ. Анчах пӑлтӑртан иртсе шалалла кӗрсен те мана хирӗҫ сас паракан пулмарӗ. Малти пӳлӗмре инвалид кӳминчи арҫын ачана пенси ҫулӗнчи хӗрарӑм яшка ҫитернине асӑрхасан чӗлхем ҫыхланчӗ.**



– Ай, Димӑпа калаҫса ҫын килнине те сисмен. Иртсе ларӑр, – тарават йышӑнчӗ мана Галина Георгиевна. – Ку – манӑн ватлӑха ырӑ сӗм кӗртекен, чуна хӗвел пек ӑшӑтса салху кӑмӑла сирекен юратнӑ мӑнукӑм, пӗчченлӗхрен хӑтаракан ытарми тусӑм. Хӑй калаҫаймасть пулин те эпӗ унпа пуплесе йӑпанатӑп. Вӑл мана йӑлт ӑнланать, хӑйӗн шухӑшне сӑмахпа ҫирӗплетеймест ҫеҫ. Ҫине-ҫинех сасӑ кӑларни унӑн савӑк кӑмӑлне систерет. Акӑ халӗ те хӑна килнӗшӗн мӗн тери хӗпӗртет.

11 ҫулти ачан хаваслӑн ҫиҫекен куҫӗпе тӗл пулсан эпӗ те вӑл хама ӑшшӑн йышӑннине туйрӑм. Тем каласшӑн ҫӑварне уҫать, анчах «а-а-а» сасӑсӑр пуҫне ним те илтӗнмест. Ырханкка алли-ури те хӑйне итлемест. Чӗлхи вылянманнипе сӗлеки юхать... Хевтесӗре куккук-амӑшӗ пӑрахса хӑварнӑ пуль тетӗр-и? Йӑнӑшатӑр. Г.Петрова хӑйӗн профессине чунран юратакан хӗрне пулӑшас тӗллевпе мӑнукне 4 ҫул каялла яла леҫме ыйтнӑ. Хусанта ӗҫлесе пурӑнакан ашшӗ-амӑшӗ кашни эрне вӗҫӗнчех аслӑ ывӑлӗ патне кучченеҫсемпе ҫитме васкаҫҫӗ.

Аслӑ пӗлӳ илнӗ, сывӑ пурнӑҫ йӗркине тытса пынӑ ӑслӑ-тӑнлӑ хӗрарӑм сусӑр ачана тухтӑрсен айӑпӗпе ҫуратнӑ. Пӗрремӗш пепкине чӑтӑмсӑр кӗтнӗ ҫамрӑк мӑшӑршӑн ҫакӑ чи йывӑр тӗрӗслев вырӑннех пулнӑ ӗнтӗ. Ытти чухне пур енӗпе те Хусана мухтакан ентешӗмсене ҫаплах калас килет: «Унти чаплӑ сыватмӑшра та синкер кураҫҫӗ пациентсем». Ҫӑмӑлланма вӑхӑт ҫитнине систерсе хырӑм аннине пӗлтерсен те Оксанӑна пӑхма тивӗҫ акушерсем ӑна пӑрахсах теприсем патне васканӑ. Операци тӑвакансем те хӑвӑртах ерҫеймен. Палатӑра пӗчченех выртса юлнӑ хӗрарӑмӑн вара пепкин пуҫӗ тухма пуҫланӑ, вӑрах вӑхӑт тапаланнӑскере сывлӑш та, вӑйхал та ҫитеймен – нерв ҫулӗсем туртӑннипе ача ӗмӗрлӗх сусӑрӑлнӑ. Хавшак кӗлеткине хӑй тӗллӗн тытайманскере пӑхса ӳстерме питӗ йывӑр пулассине пӗле тӑркач ашшӗ-амӑшӗ ӑна интернатра хӑварма килӗшмен. «Хам сӗтел хушшинче апат ҫисе ларнӑ чухне ман ачан кам куҫӗнчен пӑхса выртмалла?» – тенӗ Валерий Владимирович тӗрексӗр ывӑлне патшалӑх ҫуртне пама хистекен хурӑнташне. Ветеринар дипломне алла илсен аспирантурӑна юлнӑ Оксана Николаевнӑн та Димӑна пӗрмаях тимлӗх кирлине шута илсе вӗренӗве пӑрахма тивнӗ. Тухтӑрсене айӑпланипе юратнӑ тӗпренчӗкӗ пӗрех сывалас ҫуккине ӑнланса вӗсем ку ӗҫе суда ҫитермен. Ача ҫуратакан хӗрарӑм хӑрах урипе тупӑкра пулнине пӗрре курнӑскер тепре ҫие юлсан гинекологсем черетлӗ хут йӑнӑш тӑвасран мӗн тери шикленнине хӑй кӑна пӗлет ӗнтӗ. Телее, хальхинче ӗҫ-пуҫ йӗркеллех вӗҫленнӗ. Тӑваттӑри Артем та пиччӗшне курма кукамӑшӗ патне тӑтӑшах килет. Сас паллисене вӗренсе ҫитсен вӑл Димӑна та юмахсем вуласа парӗ-ха.

– Ачана амӑшӗ кашнинчех мунчара ҫуса-тасатса хӑварать, чӗрнине, ҫӳҫне касать. Ҫӗнӗ парнепе, пылак ҫимӗҫпе савӑнтарма та манмасть. Хӗрӗмпе кӗрӳ ывӑлӗн тертне ҫӑмӑллатассишӗн тем тума та хатӗр. Кунта килсен унран пӗр шит те уйрӑлмаҫҫӗ. Анчах пирӗн ялта ӗҫ ҫуккипе ҫамрӑклах Хусана кайса тӗпленнӗскерсен унтах таврӑнмалла-ҫке. Инвалид ухҫипе ҫемьене тӑрантараймӑн. 10 ҫул общежитире хӗсӗнсе пурӑннӑскерсем тинех кредитпа хваттер туянчӗҫ. Кивҫене тавӑрасси ҫӑмӑл мар. Ҫавӑнпах иккӗшӗ те ырми-канми ӗҫлеҫҫӗ. Ачасене пулӑшасси – манӑн тивӗҫ. Тепӗр хӗрӗн ачисем те ҫуллахи каникула кунта ирттереҫҫӗ. Шӑпӑрлансене ярӑнмашкӑн кӑҫал Валера кӗрӳ ҫак тӑвайккие ӑсталаса пачӗ. Йывӑҫпа, тимӗрпе ӗҫлеме юратаканскер тепӗр ҫулла ывӑлӗсем валли урамри карта умӗнче прицеплӑ пысӑк машина тума ӗмӗтленет, материалӗсене кӳрсе килчӗ ӗнтӗ. Ӑшӑрах чухне Димӑпа урама уҫӑлма тухатӑмӑр. Халӗ ҫанталӑк сивӗтрӗ те ача шӑнса чирлесрен хӑратӑп. Ӑна шӗвӗрех апатпа ҫӑйлама тӑрӑшатӑп, уйрӑмах йогурт ҫиме кӑмӑллать. Ҫывӑрмалли пӳлӗмре хӑйӗн юратнӑ вырӑнӗ пур, урӑх ҫӗрте канма килӗшмест. Иккӗн иккӗнех ҫав, пӗччен кичемленсе ларни мар ӗнтӗ. Ӗҫсӗр аптрасран, тула тухма сӑлтав пултӑр тесе сурӑхсем усратӑп, кӑҫал качака та туянтӑм, – чунне уҫрӗ ырӑ кӑмӑллӑ кукамӑшӗ. Бронх астми аптратиччен вӑл колхоз уй-хирӗнче вӑй хунӑ. Виҫӗ хӗр ҫуратса ӳстернӗскер 44 ҫултах упӑшкасӑр юлнӑ. Кӳршине юбилейпе саламлама каҫсан вӑй питти арҫын уяв кӗрекинчех сарӑмсӑр вилнӗ: чӑх какайӗ пыра ларнӑ-мӗн. Хӑй вӑхӑтӗнче вӑл та йывӑҫ чутлама юратнӑ. Телевизор айӗнчи эрешлӗ хӳхӗм сӗтел, картиш хапхине илем кӳрекен шурӑ хурсем ылтӑн аллӑллӑ кил хуҫине аса илтереҫҫӗ. Кун-ҫулӗ вӑрӑмрах пулнӑ тӑк вӑл сывӑх сыннисене тата нумай капӑр япалапа савӑнтарӗччӗ те... Анчах турӑ ҫырнинчен иртеймӗн теҫҫӗ. Йывӑрлӑха парӑнман туслӑ йыш. Виҫӗ хӗрӗ те ӑмӑртса тенӗ пек Хусан аслӑ шкулӗсенче вӗреннӗ, ҫемьеленсен те тӑван килтен писмен, амӑшне пулӑшма тӑтӑшах килсе ҫӳреҫҫӗ.

Тӗрлӗ чечек ӳстерме ӳркенмен Галина Георгиевна «Чӑваш хӗрарӑмӗ» кӑларӑмпа мӗн тухма пуҫланӑранпах туслӑ. Валерий Федоров амӑшне халалласа ҫырнӑ сӑвва пирӗн хастар вулакан хаҫатран темиҫе ҫул каялла касса илнӗ те паянччен паспорт хушшинче чиксе ҫӳрет. «Ман шӑпа ҫинчен хайланӑ пек туйӑнать, ҫавӑнпа типтерлӗ упратӑп. Йывӑр самантра вуласа кӑмӑлӑма хытаратӑп, вӑл хавхалану кӳрет», – тет терт-асапне сахал мар тӳснӗ утмӑла ҫывхракан хӗрарӑм. Вӑл юратнӑ хаҫатне ҫитес ҫул валли те ҫырӑнчӗ.

**Лина ТРОФИМОВА.**
Автор сӑн ӳкерчӗкӗ.

ЯЛ ТӐРӐХӖ

# Атнарсен юмах тӗнчи

**/Вӗҫӗ. Пуҫламӑшӗ 1-мӗш стр./.**

Коридорти лампочкӑсем ҫын утнӑ май ҫутӑлаҫҫӗ, ҫакӑ энергие перекетлеме пулӑшать. Атнарсем ку енӗпе те пуринчен малта пыраҫҫӗ.

«Чӑвашсен ырӑ йӑлине – нимене тухассине – пӑрахӑҫламан-ха пирӗн тӑрӑхра. Сӑмахран, пирӗн ялсенче пурӗ 18 ача-пӑча лапамӗ хута кайрӗ. Кашнинех тӗрлӗ дизайнпа йӗркеленӗ вӗсене", – стендри сӑн ӳкерчӗксемпе паллаштарчӗ Александр Николаевич. "Чи хӑтлӑ ял тӑрӑхӗ" республика конкурсӗнче 2011 ҫулта 2-мӗш вырӑн йышӑннӑ вӗсем, ҫав ҫулах Раҫҫейре 3-мӗш вырӑна тухнӑ. Ял ҫыннисем ҫине тӑнипе кӑҫал Атнарти, Сорӑмри ҫӑвасене ҫӗнӗ карта тытса ҫавӑрнӑ, тимӗр хапха лартнӑ, асӑну вырӑнне, масар ҫуртне юсанӑ. Унта ҫара тӑрӑпа хӗрес вырнаҫтарнӑ. Туканашри икӗ урамри ҫул-йӗре тӗпрен юсанӑ. Сӑмах май, ҫулсене ялсенче юртан вӑхӑтра уҫаҫҫӗ, тротуар тасатмалли техника та пур Атнарсен. Сывлӑх сыхлавне ҫӗнетмелли программӑпа усӑ курса кӑҫал Туканашра фельдшерпа акушер пункчӗ уҫнӑ.

"Ача ҫуратакансен хисепӗ пирӗн тӑрӑхра ҫулсеренех ӳсет. Хам та атте пулса тӑтӑм, тӗпренчӗкӗм виҫӗ уйӑхра кӑна-ха", – савӑнӑҫне пытармасть 48-ти арҫын. Ача-пӑчаллӑ пулма чаракан сӑлтава тутӑрсем асӑрхаман, ҫапах та 15 ҫул пурӑннӑ хыҫҫӑн тин турӑ тивлечӗ вӗсем патне ҫитнӗ.

### Хуҫалӑх ӗҫӗнче те пулӑшаҫҫӗ

2006 ҫулта Атнарта пушар хуралӗн постне йӗркеленӗ. "Хӗрлӗ автан" ял ҫыннисене уйрӑмах хӑратать, ҫавӑнпа Хӗрлӗ Чутай, Питӗркасси ял тӑрӑхӗсем та ҫак ӗҫе хутшӑннӑ. Клуба пӑсса хальхи администраци ҫурчӗ ҫумне депо стени хӑпартнӑ. Кунта пурин валли те ӗҫ тупӑннӑ: никӗсне янӑ, тӑррине витнӗ, ӑшӑ кӗртнӗ... Халӗ унта хӑтлӑ: телефон, телевизор, сивӗтмӗш, микрохумлӑ кӑмака та пур. Чи кирли – тулли цистернӑпа ларакан машина, вӑл пӗрремӗш сигналпах вут-кӑварпа кӗрешме ҫула тухма хатӗр. Унпа Раҫҫей МЧСӗн республикӑри управленийӗ тивӗҫтернӗ. Постра Владимир Железнов, Юрий Волков, Леонид Строганов черетленсе хурал тӑраҫҫӗ, вӗсемех водитель те, пушарнӑй та. Кӑҫал Атнарсем Туканашри, Сӗнтӗкҫырминчи пушарсене сӳнтерме хутшӑннӑ. Ытти вӑхӑтра вут-кӑварпа кӗрешекенсем администрацин хуҫалӑх ӗҫӗсенче пулӑшаҫҫӗ. Виҫҫӗшӗн те аллисем ылтӑн вӗсен. Акӑ хуралҫӑ йытӑ валли ҫӗнӗ ӳпле ӑсталанӑ. Боец ҫамрӑк-ха, ашкӑнма юратать. Арҫынсем кайӑксем валли вӗлле, сырӑш та туса ҫакаҫҫӗ. "Ӗҫ хатӗрӗсем йӑлтах алӑ айӗнче, ан ӳркен кӑна", – пӗлтерет дежурстврӑри Юрий Волков. Унччен вӑл ял хуҫалӑхӗнче ӗҫленӗ, Мускава та ҫӳрекеленӗ.

### Чун хавалӗпе

Атнар тӑрӑхӗнчи 11 ялта пурӗ 2849 ҫын /кӑрлач уйӑхӗ тӗлне/ пурӑнать, вӗсен 63% – ӗҫ ӳсӗмӗнчисем. Кӑҫал 26 пепке кун ҫути курнӑ, 41 ҫын вилнӗ. Ача садне 70 ытла шӑпӑрлан сукмак такӑрлатать. Пурӗ 523 хуҫалӑхра ӗне усраҫҫӗ, 10 ҫемье лаша тытать. Вырӑнти ял хуҫалӑх предприятийӗ тулли хӑватпа ӗҫлени, район центрӗ 5 ҫухрӑмра пулни халӑха ӗҫ вырӑнӗ тупма май парать. Ҫавӑнпа та кунта капмар ҫуртсем ҫӗкленнинчен тӗлӗнме те кирлӗ мар.

Шорово ялӗнчи Даниловсем патшалӑх программипе усӑ курса ҫурт ҫӗкленӗ. Ҫемье пуҫӗ Станислав Николаевич нухрат пухас тӗллевпе ҫурҫӗре шапашкӑна та ҫӳренӗ.

Станиславпа Николай Даниловсем, пиччӗшӗпе шӑллӗ, кӳршӗллӗ пурӑнаҫҫӗ. Асли Николай икӗ хутлӑ ҫурт хӑпартнӑ. Амӑшӗ Ольга Петровна вӗсемшӗн, ҫавӑн пекех 5 мӑнукӗшӗн, пурте хӗр пӗрчисем, хӗпӗртет. "Ӗҫсе ӳсӗрӗлсен упӑшка хушӑран "хӗр ҫуратаймастӑн, мӗнле хӗрарӑм эсӗ?" тесе сӑмахпа тӗксе илетчӗ. Шел те, хӑй мӑнуксемпе савӑнаймарӗ, ҫӗре кӗчӗ", – каласа парать кинемей. Вӑл кӗҫӗн ывӑлӗн ҫемйипе пурӑнать. "Ачасем мӗн пӗчӗкрен ӗҫе хӑнӑхрӗҫ. Эпӗ фабрикӑра кайӑк-кӗшӗк пӑхаттӑм, ҫапах та ял хуҫалӑх ӗҫӗнчен пӑрӑнман. Кӑшман, купӑста, кишӗр тӳпи илеттӗм. Ывӑлӑмсем каникулта урам тӑрӑх чупса ҫӳремен, уя ҫум ҫумлама кайнӑ. Кӗркунне хӑмла татма яраттӑм", – аса илет амӑшӗ.



Даниловсен хӗрӗсем пӗрремӗш юртан Хӗл мучи ӑсталанӑ, унпа юнашар Юр пике те кӗҫех ӳссе ларӗ. Ял тӑрӑхӗ Ҫӗнӗ ҫул умӗн ирттерме палӑртнӑ конкурсра кӑҫал пӗрремӗш вырӑн йышӑнма ӗмӗтленеҫҫӗ ачасем. "Уяв умӗн килсе курасчӗ сирӗн. Юмахри пекех ун чухне, кил умне кашни капӑрлатать, гирлянда ҫутипе пӗтӗм урам йӑмӑхать... Хӑш-пӗрин пултарулӑхӗ такама та тӗлӗнтерӗ. Иртнӗ ҫулсенче, сӑмахран, виҫӗ пуслӑ аҫтаха, шурӑ урхамах, тӑвайкки, темӗн те пӗр ӑсталарӗҫ. Кишля ялӗнчи Абаськинсемпе Юманкинсен ӗҫӗсем пурин кӑмӑлне кайначчӗ. Ҫӗнӗ ҫул каҫӗнче тӗрлӗ сӑнар ҫи-пуҫӗ тӑхӑнса чӑрӑш тавра ҫавӑрнатпӑр. Конкурс ҫӗнтерӳҫисене бал-маскарадра чыслатпӑр", – пӗлтерчӗ ял тӑрӑхӗн администраци пуҫлӑхӗн ҫумӗ Альбина Наумова.

Атнарсем Ҫӗнӗ ҫула вӗттинчен пуҫласа ватти таранччен кӗтеҫҫӗ, хатӗрленеҫҫӗ. Тӗрӗссипе, ял ҫыннисем уявра кӑна мар, кулленхи пурнӑҫа та юмаха ҫавӑрма ӑнтӑлаҫҫӗ. Тӗнче хамӑртан пуҫланать-ҫке, унта илемпе сапӑрлӑха кӗртме пӗлмелле кӑна. Ку тӗлӗшпе Атнарсенчен вӗренмелли чылай.

**Алина ИЗМАН.**
**Автор сӑн ӳкерчӗкӗ.**



ЯВАПЛĂХ

# Упăшки купăс калать, арăмĕ юрлать

**Кирек хăш самантра сцена çине тухма хатĕр вăл: çи-пуçĕ çыпăçуллă, пушмакĕ йăлтăртатать. Куççăр çын çапла тирпейлĕ çӳренине пурте тӳрех асăрхаççĕ. Çакăншăн, паллах, мăшăрне тав тăвать Александр Краснов. Вĕсем иккĕшĕ 26 çул пĕрле пурăнаççĕ. Александр Александровичпа Валентина Николаевнăн хĕрĕ Елена та хăйĕн çулне тупнă. Çемье те çавăрнă.**



## Мăшăрпа пĕрле апат та тутлăрах

«Эпĕ арăма халĕ те çамрăк чухнехи пекех юрататăп», – пытармасть арçын. Вăл мăшăрĕн сăнне нихăçан та курман. «Сарă вăрăм çӳçлисем килĕшетчĕç. Манăн арăм шăпах вĕсен йышĕнчен. Паллашнă чухне шурă çаврашкаллă хĕрлĕ кĕпе тăхăннăччĕ Валентина», – аса илет Александр Александрович. «Шупашкарти кăнтăр районĕн культура керменĕнче ăна пĕрремĕш хут курсанах чĕре хускалса илчĕ. Ун чухне 1-мĕш ушкăн инваличĕччĕ вăл. Ăна ырă кăмăлĕшĕн килĕштертĕм. Арçынсен хушшинче унашкалли сахал. Вăл купăс калатчĕ, эпĕ юрлаттăм», – иртнине куç умне кăларма пулăшать хĕрарăм. Çур çултанах хăнасене туй кĕрекине пуçтарнă вĕсем. «Арăмпа пĕрле телевизор умĕнче ларма та, апат çиме те кăмăллă», – каласа кăтартать çемье пуçĕ. Валентина Николаевна илемлĕ фильмри кашни саманта ăнланма пулăшать ăна. «Малтан иксĕмĕр кинотеатра та çӳреттĕмĕр. Çапах калаççа ларни куракансене чăрмантарнăран халĕ килте кăна кино курма тивет», – палăртать Александр Александрович.

Килте мăшăрне май пур таран пулăшма тăрăшать вăл: путвалтан пахча çимĕç илсе тухать, савăт-сапа çăвать, çӳпçапа илсе тухать.

## Куç çивĕчлĕхĕ чакни

Канаш районĕнчи Турханкас Чарпуçра çуралнă Александр малтан лайăххах курнă. Ача тăваттăмĕш класа çитиччен Ямаш шкулĕнче вĕреннĕ. «Пĕррехинче вĕрентекен тетрадь çине пăнчă лартрĕ те çаврашка ӳкерме хушрĕ. Эпĕ кăранташпа паллă тунине курмарăм», – куç çивĕчлĕхĕ чаккнине çавăн чухне пĕрремĕш хут асăрханă арçын ача. Кайран доска çинче çырнине вулайми пулнă. Çакăн хыççăн Шупашкарти япăх куракансен тата куççăррисен интернат шкулне куçарнă ăна. Кунта Александр çĕнĕ юлташсем тупнă.

Шупашкарта кăна мар, Мускаврва та сипленнĕ вăл, çапах усси пулман. Халĕ çутăпа тĕттĕме çеç уйăрма пултарать Александр Краснов.

## Пурнăçланнă ĕмĕт

Амăшĕ Валентина Андреевна ывăлне пĕчĕк чухнех купăс калама вĕрентнĕ. Шупашкара куçсан та çак ăсталăха туптанă арçын ача. «Çитĕнсен манăн та ачасене купăс калама вĕрентесчĕ», – пĕррехинче Гагарин урамĕнчи музыка шкулĕ патĕнчен иртсе кайнă чухне шухăш çуралнă унăн. Çак ĕмĕте пурнăçа кĕртес тĕллевпе Курскри музыка училищинче пĕлӳ илнĕ Александр Краснов.

Халĕ япăх куракансен тата куççăррисен интернат шкулĕнче воспитательте ĕçлет вăл, ачасене купăс калама хăнăхтарать. «Хăш чухне, чирлесен, хамăн вĕренекенсем патне каяймастăп. Кайран, тĕл пулсан, «эпир сире мĕнле кĕтрĕмĕр» теççĕ. Çакă, паллах, савăнтарать», – ачасене чунран юратаканскерĕн пичĕ кулăпа çуталать. Унăн вĕренекенĕсем республика конкурсĕсенче те мала тухаççĕ.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

КИВĔ СĂН ӲКЕРЧĔК

# Вĕл! вĕлкĕшрĕ салтак тутри

Çак сăн ӳкерчĕке 1951 çулта Шупашкар районĕнчи Кипечкасси ялĕнчи Александр Чугунова салтак ăсатнă чухне ӳкернĕ. Тăрантас çинче купăс калаканĕ – Панфил Молаев. Вăл халĕ пурăнать-ха. Хĕрсенчен Анфисăпа Нина çеç юлчĕç, ыттисем ку тĕнчере çук ĕнтĕ.

Çар хĕсметне каякана хĕрсем тутăр çĕлесе паратчĕç. Салтак каччи çамрăксемпе пĕрле ял-ял тăрăх лаша кӳлсе чупнă, тăванĕсем патне сыв пуллашма кĕнĕ, купăс каласа юрланă, тутăр вĕлкĕштернĕ. Пирĕн тăрăхри салтак юррипе сире те паллаштарас тетĕп, ăна итленĕ май пирĕн куççуль тухатчĕ.

Карта хыçне кантăр акрăм –
Кайăк кулли пулать пуль.
Яштак пĕве çитĕнтертĕм –
Китлĕр кулли пулать пуль.

Вăрман хĕрне вут хутăм –
Çунаймасăр выртать пуль.
Ял варринчи сар варлийĕ
Çывраймасăр выртать пуль.

Аттин те кил хушши
çатма пек –
Ç/ă/марта та кусса каяс пек.
Ç/ă/марта та кусса каяс пек
мар,
Эпир те тухса каяс пек.
Ки-как та ки-как, ай, хур
кайăк –
Кайри мала ан тейĕр.
Эпир те тухса кайсассăн
Кайччăр та пĕтчĕр, ай,
ан тейĕр.

Вĕç-вĕç те тутăр, ай, шур
тутăр,
Çӳçи те юхса, ай, пĕтиччен.
Макăр та макăр, ой,
сар варли,
Сар çӳç те юхса, ай,
пĕтиччен.

Вĕç-вĕç те тутăр, ай,
шур тутăр,
Вĕлкĕш те вĕлкĕш, ай,
юлашки.
Атти те апи, сывă юлăр.
Курса та юлăр, ай, юлашки.

Сывă пул, вăрман, сывă пул,
шĕшкĕ.
Иртрĕ мăйăр татасси.
Сывă пул, тăван, сывă пул,
савни.
Иртрĕ пĕрле пуласси.

**Нина АНТОНОВА.**
Шупашкар районĕ.



АСА ИЛӲ

# Ăйăр çăлчĕ

Веня Фадеев Хуракасси фермисенче слесарь-сантехникре ĕçлетчĕ. Совхоз директорĕн шăллĕ пулнипе-ши, лаша витинче ташласа тăракан чи харсăр ăйăр унăн урхамахĕ шутланатчĕ.

Пĕррехинче Шупашкартан юлашки автобуспа Хуракассине çитсен Веньăна куртăм. Хăйĕн «Вернăйне» столовăй умĕнчи юпаран кăкарнăччĕ. Пĕлĕшĕм мана хистесех хыçлă çуни çине лартрĕ, яла леçме шантарчĕ.

Ватварри ятлăката пуçне çитрĕмĕр кăна – хыçра темиçе кашаман кăштăртатнине асăрхарăмăр. Çакăнти вилнĕ выльăхсене çунтармалли кăмака патне хыпаланаççĕ ĕнтĕ вĕсем. Ялан унта апатланаççĕ.

– Сирĕнтен хăраса тăрăпăр-и?! – ракетница кăларса печĕ вĕсене лавçă. Çĕр-шыв чиккине сыхланă саппасри прапорщик ăна çартанах илсе килнĕ-ши? Пĕр кашкăрĕ, пирĕн çуна çинех сикме тăнăскер, хăрушшăн çухăрса тӳнчĕ. Хăранипе йĕп-йĕпе тара ӳкнĕ «Вернăй» ялалла сиккипе талпăнчĕ.

Аслă çул çине тухсан хирĕç килекен трактор çутинчен шикленсе-ши выçă кашкăрсем пирĕнтен хăпрĕçех. Вĕсем тепĕр еннелле çаврăнса кайнине асăрхасан тинех лаштах сывласа ятăмăр. Пире кашкăрсенчен тарса хăтăлма пулăшнă «Вернăй» çăварĕнчен кăпăк тухакан пулнăччĕ, хăй çапах малаллах ыткăнчĕ.

Паян пирĕн хушăра çук Веня. Унăн ăйăрне те совхоз салансан тутарсем ашлăх туянса кайнă терĕç.

**Анатолий АНИШОВ.**
Сĕнтĕрвăрри районĕ.

САНĂН ТУСУ ПУЛАМ-И?

Эпĕ 32 çулта. Качча кайман. Пирус туртман, эрехпе айкашман, кăмăллă каччăпа паллашса çемье çавăрасшăн.

Телофон – редакцире.

**ГАЛЯ.**

ЧУНРИ

# Атте сăмахĕсем...

Манăн атте – Леонид Ефимович Ефимов связист – салтакра çичĕ çул пулнă. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинчен çĕнтерӳпе таврăнсан пĕр вăхăт – электромонтерта, хĕрĕх çула яхăн водительте вăй хунă. «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçата алла илсен пĕр статйине сиктермесĕр вуласа тухатчĕ. Пĕррехинче Лидия Сарине хулари пĕр ĕç коллективĕнче тăрăшакан сăпайлă хĕрарăм пирки чун-чĕре ăшшипе çырнă статьяна вуласан:

– Вăт, çавăн пек çынсем ытларах пулинччĕ пирĕн хушăра. Çынлăх çинчен мантăмăр вĕт эпир, пĕр-пĕрне хисеплеме пачах пăрахрăмăр. Тавралла çаврăнса пăхар-ха... – ассăн сывларĕ юратнă аттем.

Хăй халĕ пирĕн хушăра çук пулин те сăмахĕсем яланах чĕрере упранаççĕ. Хам та çитмĕлелле çывхаратăп, çавăнпа пурнăç, çынсен тыткаларăшĕ куç умĕнчех улшăннине темиçе тĕслĕхпе çирĕплетме пултаратăп. Эпир ачаранах пĕр-пĕрне хисепленĕ, пулăшма вăхăт тупнă. Салтак шинельне хывсан пĕр кун тăхтамасăр колхоз ĕçне пикеннĕ. Хальхи пек: «Мĕн чухлĕ тӳлеççĕ?» – тесе ыйтман, тăван колхоза пулăшма васканă. Ватти-вĕттипе те вашават калаçнă. Ялта çурт-хуралтă лартмалла-и, çăл чавмалла-и е анкартинче утă çулмалла-и – пурне те нимелле пулăшнă, ĕçленĕшĕн кил хуçинчен укçа ыйтман.

Телее, ятлă-сумлă çынсем ялта паян та пур-ха. Кун-çулне сурăх фермипе çыхăнтарнă Клавдия Фролова 89 çула çитрĕ. Фронтовик арăмĕ çын çине шурă куçпа нихăçан та пăхман. Вашават, ăшшăн калаçать вăл пуринпе те. Колхозсем арканчĕç пулин те ял çыннин пахчана вăхăтра сухаламалла. Кун пек чухне ентешĕсене Витя Тимофеев хăйĕн тракторĕпе пулăшать, ĕçне тĕплĕ пурнăçлать. «Чăн-чăн çын эсĕ», – тав тăваççĕ ăна ваттисем.

Ыррине асăнтăм-ха, анчах япăххи те тĕл пулать-çке. Каç пулттипе Красноармейскине Шупашкартан черетлĕ автобус çитсе чарăнчĕ. Салонта халăх йышлă, канмалли кунсенче, уйрăмах хĕрӳ ĕççи вăхăтĕнче, яланах çапла. Çынсем пĕрин хыççăн тепри тухрĕç транспортран. Пĕр утмăл çулсенчи арçынна тăруках тем пулчĕ. Чарăнури сак çывăхне чĕркуçленчĕ вăл. Анчах никам та ăна асăрхамарĕ, хута кĕрекен те, хĕрхенекен те тупăнмарĕ.

Çынлăх туйăмĕ чĕресенче сӳнсех пырать. Çамрăксем паллакан çынна тĕл пулсан та сывлăх сунма ӳркенеççĕ-çке. Пулăшу ыйтсан та вăл е ку сăлтав шыраса пăрăнаççĕ. Харпăр хăйшĕн кăна тăрăшать, ыттисене курмасть те тейĕн. Анчах ватăлсан пурин те çын куçĕнчен пăхас вăхăт çитет-çке. Ун чухне çамрăклăхри чурăслăхĕ аса килĕ-ши?

**Георгий ТУСЛИ.**
Красноармейски районĕ.





АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР



### Чăх салачĕ

**200 грамм чăх какайĕ, 3-4 çĕр улми, 2 кишĕр, 200 грамм шампиньон, пуçлă 1 сухан, 2 пан улми, 3 çăмарта, 100 грамм сыр, маринадланă 3 хăяр, майонез кирлĕ.**

Чăх какайне, кишĕре, çĕр улмине, çăмартана уйрăммăн пĕçермелле. Кăмпана суханпа пĕрле ăшаламалла. Кишĕре, çĕр улмине, пан улмине, сыра теркăламалла. Сухана, çăмартана, чăх ашне, хăяра вĕттĕн турамалла. Салата сийлесе /кăмпапа сухан – çĕр улми – хăяр – кишĕр – чăх какайĕ – пан улми – çăмарта/ хумалла. Кашни сийе майонез сĕрмелле. Çиелтен сырпа, пан улми касăкĕсемпе илемлетмелле.

### Пицца

**4 апат кашăкĕ хăйма, 4 апат кашăкĕ çăнăх, 1 çăмарта, чĕптĕм тăвар, кăлпасси, сыр, сухан, помидор, укроп кирлĕ.**

Хăймана çăмартапа, çăнăхпа, тăварпа пăтратмалла. Шĕвĕ чустана çу сĕрнĕ çатмана ямалла. Вĕттĕн туранă сухана çурма пиçиччен ăшаламалла. Кăлпассие – пĕрчĕлесе, помидора – çаврашкан, укропа вĕттĕн касмалла. Çак çимĕçсене чуста çине хумалла, кетчуп хушмалла. Çиелтен теркăланă сыр сапмалла. Хупăлчапа витнĕ çатмана вăйсăр çулăм çине лартмалла. Сыр ирĕлессе кантăк хупăлча витĕр сăнамалла. 15 минутран пицца пиçет.

### Банан кукăлĕ

**Чуста çăрма 200 грамм çăнăх, 30 грамм сахăр, чĕптĕм тăвар, 100 грамм услам çу кирлĕ.**

**Ăшне хума 80 грамм услам çу, 120 грамм сахăр, 2-3 банан хатĕрлемелле.**

Çăнăха тăварпа, сахăрпа пăтратмалла, услам çу татăкĕсем хушмалла, 100 миллилитр шыв ярса чуста çăрмалла. Ăна апатçимĕç çатăркипе чĕркесе 30 минутлăха сивĕтмĕше хумалла.

Услам çăва ирĕлтермелле, сахăр хушмалла. Çак хутăша çатма тĕпне ямалла. Ун çине çаврашкан каснă банан хумалла. Ăна чустапа хупламалла. Банан кукăльне 20 минутлăха духовкăна лартмалла. Пиçсен ăна ывăç çине çавăрса хумалла.

### Çăмартапа, пăрăçпа

**3-4 çĕр улми, пуçлă 1 сухан, 3 çăмарта, 30-40 грамм сыр, 1 пылак пăрăç, майонез кирлĕ.**

Çĕр улмипе çăмартана пĕçерсе теркăламалла. Сухана çурма çаврашкан касмалла, ылтăн тĕс çапиччен ăшаламалла. Пылак пăрăça, сыра тăваткалласа турамалла. Салата сийлесе /çĕр улми – сухан – çăмарта – пылак пăрăç – сыр/ хумалла. Кашни сийе майонез сĕрмелле.

### Торт

**Чуста çăрма 2 çăмарта, 1 стакан сахăр, 1 стакан сĕт, 1 стакан варени, 2 чей кашăкĕ апат соди, 2 стакан çăнăх кирлĕ.**

**Крем валли 2 стакан хăйма, 1/2 стакан сахăр çăнăхĕ хатĕрлемелле.**

Çăмартана сахăрпа пăтратмалла, сĕт, варени, çăнăх, апат соди хушмалла. Çак чустаран икĕ пăшалу пĕçермелле, вĕсене айккинчен çурмалла касмалла.

Хăймана сахăр çăнăхĕпе пăтратмалла. Пашалусене крем сĕрмелле. Торта сивĕтмĕше лартмалла.

### Печени

**0,5 стакан сĕлĕ хăрпăкĕ, теркăланă 1/4 стакан шăккалат, 1 банан, 1 чей кашăкĕ ваниль сахăрĕ, 1 апат кашăкĕ кавăн вăрри, 1 чей кашăкĕ какао кирлĕ.**

Шăккалата микрохумлă кăмакара ирĕлтермелле. Ăна вилкăпа çемçетнĕ бананпа пăтратмалла. Кастрюльте ытти çимĕçе хутăштармалла, шăккалат хутăшĕ ямалла. Пергамент сарнă турилккене кашăкпа ăсса 7 печени хумалла. Ăна сивĕтмĕшре 1 сехет тытмалла.

ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ

## Ура сыппи шыçман-ши?



**54 килограмм таякан вăкăр туянтăмăр. Выльăх ытларах выртать. Манăн шухăшпа, унăн хыçалти ура сыппи шыçнă. Укол туни пулăшмĕ-ши?**

**Е.МАКАРОВА.**
Çĕрпӳ районĕ.

Виçипе хаклас тăк, вăкăр пĕчĕк-ха, çавăнпах вăл ытларах выртать те. Шăмă сыппи унăн йĕркеллех тен. Кĕлетки имшертен сыпă тĕлĕ шыçнă пек курăнать. Витамин, кальци выльăха вăй кĕртĕç. Ветеринара кăтартни те ытлашши пулмĕ.

## Качака туянтăм та

**Пасартан качака илтĕмĕр. Ку чĕр чуна усраса курманччĕ те çавăнпа та харăсах темиçе ыйту çуралчĕ. Выльăхăн çӳлти шăлĕсем çукки тĕлĕнтерчĕ. Сĕчĕ те питĕ сахал. Малтанхи хуçи каланă тăрăх – путеккисене ĕмĕртнĕ хыççăн сумалăх та юлнă. Качака пĕтĕ мар-ши, хырăмĕ пысăк пек туйăнать. Выльăх темшĕн хăсать. Манăн ыйтусене уçăмлатсамăр.**

**П.ВЛАДИМИРОВА.**
Канаш районĕ.



Качакан çӳлти шăлĕ çукки – йĕркеллĕ пулăм. Унăн пурĕ 32 шăл, анчах çӳлте вĕсем сайра. Хăсни те хăрушă мар. Сĕт сахалли выльăх пурăнмалли вырăнне улăштарнипе çыхăннă ахăртнех. Пĕр уйăхран вăл çĕнĕлĕхе хăнăхса çитĕ, йĕркене кĕрĕ. Качака ами така патне кайнă тăк пĕтĕленме те пултарнă, кун пирки, тен, хуçисем сиссе те юлайман. Качака çулталăкра пĕр хутчен пăранлать.

ЧӲРЕЧЕ АНИНЧЕ

# Суя пальма

**Пӳртре ӳстерме суя пальма пуррине илтнĕччĕ. Ун çинчен тĕплĕнрех пĕлес килет.**

**В.СИДОРОВА.**

Зами тата цикас – пӳлĕмре ӳстермелли суя пальма сорчĕсем. Цикас питĕ вăрах çитĕнет, 60 сантиметр çӳллĕш çеç пулать. Унăн туни хулăн, пальмăнни евĕр çулçисем саркаланса тăраççĕ, вĕсен тăррисем тĕке аса илтереççĕ. Тин тухаканнисем вара спираль пек пĕтĕрĕнчĕк. Харăсах темиçе çулçă тухать. Аçа чечекĕ çинче 40 сантиметр тăршшĕ йĕкелсем пулаççĕ. Ама чечекĕн вăрлăх çулçисем кĕскерех, çăмлă та çемçе. Цикас тунинче тата çимĕçĕнче саго хатĕрлемелли крахмал пухăнать. Çапах çимĕçне чĕрĕлле ас тивме юрамасть – наркăмăшлă. Ку ӳсен-тăранра нейротоксин нумай, ăна тутансан чĕр чун та, этем те хăсма пуçлать, хĕне кайнипе вилме те пултарать. Çавăнпа пĕчĕк ачаллисен наркăмăшлă çак чечеке ĕрчетмелле мар.

Пальма йышшисен хушшинче чи хитри шутланакан черчен цикаса ӳстерме çăмăл мар: вăл çутăра çеç вăй илет. Çавăнпа ăна кăнтăр енчи чӳрече анине лартмалла. Кун кĕскелсен ятарлă лампăпа çутатса пулăшмалла. Унсăрăн вăрăм çулçисем лайăх аталанаймасăрах сарăхса типме пуçлаççĕ, вĕсене çийĕнчех татса пăрахмалла. Çутă çитменнипе чечек пачах ӳсме пăрахать, темиçе çул хушшинче те пĕр çулçă та тухмĕ. Телее, температура улшăннине чиперех тӳссе ирттерет. Хĕлле 12-16 градус ăшăра та хăйне аван туять. Çулла ăшша юратать, ăна балкона е картишне кăларсан та юрать, анчах хĕвел шевлипе ытлашши пиçесрен çиелтен хӳтлĕх кирлĕ.

Тăтăшах шыв сапмалла. Уйрăмах çулла икĕ хут шăварсан лайăхрах: пур тымарне те нӳрĕк çиттĕр. Çапах тăпрана куллен нумай йĕпетсен чечек хăрма пултарать. Шăварнă чухне йĕкелсем çине шыв лексрен асăрханмалла: вĕсем çĕрме пуçлаççĕ. Ака-çурла уйăхĕсенче пальмăна кальци, магни тăварĕсемлĕ ятарлă им-çампа «апатлантармалла».

Цикас туни çинче ӳснĕ хунавсенчен ĕрчет. Касса илсен кăмрăк сĕрмелле, икĕ кун типĕтмелле. Ун хыççăн çулçă çĕрĕкĕ, торф тата хăйăр хушнă тăпрана лартмалла. Икĕ уйăхран шăтса тухĕ. Пальма валли сарлака мар, анчах çӳллĕрех куршак суйлăр. Вăл тăпра ытлашши йӳçек пулнине юратмасть. Унта азот, тимĕр çитмесен те çулçисем сарăхаççĕ. Аялти çулçăсем ватăлса тĕссĕрленни кĕçех çĕннисем тухса вăй илессине систерет.



ТĔКĔР УМĔНЧЕ



# Хура пăнчăсенчен хăтăлма

**Кирек хăш ӳсĕмри хĕрарăмăн та тĕрлĕ сăлтава пула сăмса çинче хура пăнчăсем тухаççĕ. Сывăрас умĕн пите çума мансан та, пахалăхсăр косметикăпа усă курсан та тухххăмрах палăраççĕ вĕсем. Хĕрне ашшĕ-амăшĕнчен те куçаççĕ. Çуллă, тăварлă, пылак, тĕтĕмленĕ апат-çимĕçе кăмăллакансемпе кофе нумай ĕçекенсен те, эрех-сăрапа иртĕхекенсен те сывлăхшăн сиенлех мар, çапах сăн-пите илемсĕрлетекен çак пăнчăсемпе кĕрешме тиветех. Вĕсене косметолог çăмăллăнах тасатать-ха, анчах çакăншăн енчĕке çӳхетме тивĕ. Пăнчăсенчен килте мĕнле хăтăлма пулать-ши?**

Салтак тӳмине, юман хуппине, шăл курăкне вĕретнĕ çур стакан шывра пăшăхламалла. Çак шĕвекре йĕпетнĕ мамăкпа пите тасатмалла, тепĕр 5 минутран скрабпа усă курмалла.

Вĕтетнĕ кофене пите çумалли гельпе хутăштарса хура пăнчăллă вырăнсене сăтăрмалла.

Типĕ ӳтлисен çуллă скраб хатĕрлемелле: 1 чей кашăкĕ тăвара 1 апат кашăкĕ хăймапа çăрмалла. Хутăша пите, сăмса çине сĕрмелле. 5 минутран ăшă шывпа çумалла. Ку мел хура пăнчăсенчен тасатать кăна мар, кушăрханă ӳте те çемçетсе илем кӳрет.

Кун хыççăн питри вĕтĕ шăтăксене пĕрес тĕллевпе ӳте марльăпа чĕркенĕ пăр катăкĕпе асăрханса сăтăрмалла. Инфекци лексрен çак вырăна бактерисене пĕтерекен крем сĕрмелле. Анчах пит çинче вĕтĕ юн тымарĕсем курăнсан /купероз/ е пӳрлешкесем пулсан ăна пăспа çемçетме юрамасть.



Пите сĕрнĕ шурă тăм вĕтĕ шăтăксенчи хурана, çу парĕсене, тусана хăйĕн çумне туртса илет.

Çывăрас умĕн хура пăнчăллă вырăнсене шăл пастипе сăтăрмалла. Ирхине ăна шывпа çумалла, тутлăхлантаракан крем сĕрмелле.

Лимон сĕткенĕ те, теркăланă хăяр та, алоэ çулçине блендерпа вĕтетсе хуни те ӳте лайăх тасатать.

КАЛА-ХА, ТĔЛĔКĔМ



**Пуçлăхпа калаçни** – пысăк чăрмава,

**пуçлăхпа эрех ĕçни** – çывăх вăхăтра тупăш илессе,

**пуçлăхпа вăрçăнни** – выговор илессе,

**пуçлăха ларни** – пĕчĕкрех должноçа куçарасса,

**тăвансенчен кам та пулин пуçлăх вырăнне йышăнни** – килти пысăк пăтăрмаха,

**пуçлăха хĕнени, вĕлерни** – пысăках мар тупăша;

**ĕçлесе ывănни** – вăй-хала кирлĕ пек усă курнипех хисеп çĕнсе илессе,

**çынсем ĕçленине курни** – сире юрăхлă ăнăçлă самант çаврăнасса,

**хăвăр тивĕçе урăххине шанса пани** – ĕçри пăтăрмаха,

**хĕрарăм кам патне те пулин киле ĕçлеме кĕни** – савăнăç кӳмен вырăнта чылай ĕçлессе, çакă мĕн пур вăхăта, вăя илессе,

**ĕç шырани** – кĕтмен тупăша,

**ĕçсĕр тăрса юлни** – йывăрлăха парăнманни, хăвăр вăя шанни, ĕçе пĕлсе пурнăçлани.



КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

Хĕллехи çил-тăманлă ир мана тем ырринех шантармарĕ. Тумланса тĕкĕр умĕнче чиперленсен инçе çула тухас умĕнхи йăлапа пукан çине ларнăччĕ çеç – пӳлĕмри телефон шăнкăртатрĕ.

– Елена Владимировна, эсир паян больницăна килейместĕр-ши? Сире пирĕн пациент питĕ курасшăн, – лини вĕçĕнчи çамрăк медсестра манăн пĕрремĕш юратăвăн хушаматне асăнчĕ. Ара, Леньăпа юлашки хут тĕл пулнăранпа 15 çул та иртрĕ-çке. Халĕ тин мĕн çинчен калаçасшăн-ши?

– Вăл чăнласах та манпа курнăçасшăн-и? Эпир тахçанах хутшăнма пăрахнă-çке, – терĕм ним калама аптранипе.

Хыпалансах урама тухрăм, кӳршĕ ĕçе кайма ĕлкĕрейменнипе усă курса ăна машинăпа район больницине леçме ыйтрăм. «Тимĕр урхамахпа» вĕçтерсе пынă май асăмра çамрăк чухнехи пулăмсем кинори пек ӳкерĕнчĕç.

...Районăн тепĕр вĕçĕнче çуралса ӳснĕ йĕкĕтпе эпĕ университета вĕренме кĕрес тĕллевпе экзаменсем тытма кайсан паллашнăччĕ. Каярахпа иксĕмĕр те пĕр факультетрах ăслăлăх чулне «кăшларăмăр», пĕр общежитирех пурăнтăмăр. Леньăпа Шупашкарти кӳлмек хĕрринче тăтăшах уçăлса çӳреттĕмĕр, тепĕр чухне драмтеатра спектакль курма кĕреттĕмĕр. Тăтăшах юнашар утнине асăрхакансем пире пĕр тăхтамасăрах туй кĕрекине лартма та хатĕрччĕ. Каччă хăй те авланас шухăшлине пытармасчĕ. Пĕррехинче ватă амăшне пулăшас сăлтавпа илĕртсе мана та тăван ялне ертсе кайрĕ. Ун умĕнчех мана арăмĕ пулма ыйтрĕ. Эпĕ тӳрех килĕшмерĕм, шухăшласа пăхма шантартăм. Лиза аппа ман ят çумне «кин» сăмаха хушса хума та ĕлкĕрнĕччĕ ĕнтĕ... Анчах пирĕн çулсем пĕрех уйрăлса кайрĕç.

Ытла çамрăк пулнипе-ши, пĕр-пĕрин туйăмĕсене хаклама пĕлмерĕмĕр. Леня хамран ниçта та тарманнине пĕле тăркач унпа курнăçас вăхăтрах тепĕр йĕкĕтпе кинона кайма пултараттăм. Унăн чĕри мĕн тери ыратни мана хумхантармастчĕ. Харăсах темиçе каччăн чунне çунтарас килетчĕ, вĕсене илĕртес тĕллевпех куллен кĕске юбка, çĕтă кĕпе, çӳллĕ кĕлеллĕ пушмак тăхăнса çӳреттĕм.

Леня хăй те хӳхĕм хĕрсене курсан сăмах хушмасăр иртейместчĕ, кашни ташă каçĕнчех çĕнĕ чиперукпа вальс çаврăнатчĕ. Çавăнпа вăл мансăр пуçне ыттисемпе те юратулла вылянăн туйăнатчĕ. Савнисем мар, çывăх туссем пулнă-тăр эпир. Пĕррехинче конкурса ертсе пыракан хистенипе Леньăн тепĕр общежитири студенткăна ман умрах чуп тума тиврĕ. Çакна курнă хыççăн эпĕ ентешĕмпе калаçма пăрахрăм.

Мана савса пăхакан нумайччĕ çав ун чухне. 35 çул тултарнă тĕле икĕ хут качча кайса уйрăлма ĕлкĕртĕм. Тĕлĕнмелле, çемье пурнăçĕ ăнманни те мана пăшăрхантармасть, нимĕншĕн те кулянмастăп, вĕчĕрхенместĕп. Тен, хама кăна юратакан çын пек те курăнатăп-тăр. Çапах чунăм çамрăк чухнехиллех ирĕкре юлнăшăн, никама пăхăнманлăха суйланăшăн савăнатăп çеç. Хальччен пĕр арçын та мана кутăнла йăласенчен пистереймерĕ. Ахăртнех, эпĕ чул чĕреллĕ пекрех туйăннăран унăн уççине шырама ӳркенчĕç-тĕр. Хальлĕхе ача çуратса алурана çыхлантарманнипе усă курса çуллен отпуск вăхăтĕнче инçетри çул çӳреве тухатăп. Карьера картлашкипе хăпарма чăрмантаракан та çук. Питĕ меллĕ, эпĕ хамăн кулленхи пурнăçпа сĕре кăмăллă.

Акă район больници умĕнче машинăран анса юлтăм. Картлашкапа хăпарнă май чĕрем теме кĕтсе хыттăн-хыттăн тапма пуçланине сисрĕм. Пăлханатăп иккен. Эпĕ больница шăршине тӳсме пултараймастăп. Леньăна тăрук мĕн тума кирлĕ пултăм-ши? 15 çул иртсен вăл мана мĕншĕн аса илнĕ-ши? Пуçа çак ыйтусем канăçсăрлантарнипе хама кирлĕ палата умне хăш вăхăтра çитсе тăнине те сисмерĕм.



# 15 çул иртсен...

Леня ансăр кравать çинче кивĕрех утиялпа витĕнсе выртнă. Чӳрече еннелле пăхаканскер мана асăрхамарĕ те. Вăл яланах тирпейлĕ хырăнса, çыпăçуллă тумланса çӳретчĕ. Халĕ шăртлă сухалĕ кăтраланма пуçлани хуçи эрне ытла ура çине тăрайманнине систерчĕ. Пит çăмартисем путса кĕнĕ, сăнĕ шуранка, тахçан хуп-хура пулнă çӳçĕ те кĕмĕл тĕспе йăлтăртатать. Урамра курас тăк тӳрех палласа та илеймĕттĕм. Питĕ хĕрхентĕм ăна. Çапах çакна чирлĕ çынна палăртас мар тесе хавхаланулăрах калаçма тăрăшрăм.

– Салам, Леня. Сана курма питĕ хавас эпĕ, – терĕм вăйсăр аллине сĕртĕннĕ май.

– Лена?! Эсĕ пĕртте улшăнман иккен, – шăппăн пăшăлтатрĕ вăл. – Çамрăк чухнехиллех савăк кăмăллă та илемлĕ...

– Эсĕ мана курасшăнччĕ-и?

– Çапла, – хĕне кайнă арçын чĕтренсен аллипе çамка çинчи тарне шăлчĕ. Ăна чăннипех те питĕ йывăр иккен. – Эпĕ кĕçех леш тĕнчене каятăп пуль. Юлашки сывлăш тухас умĕн санран каçару ыйтас килчĕ. Пирĕн юрату юмахри пек телейлĕ вĕçленейменшĕн хамах айăплă-тăр...

– Ку темех мар-ха. Лăплан, санăн халĕ нумай калаçма юрамасть.

– Çапах та хам сана паянчченех юратса пурăннине пĕлтерес килет. Çаплипех саватăп. Хамăн çăмăлттайлăха пула çухатнăшăн чунран ӳкĕнетĕп. Çамрăк чухне нумай хĕр хыççăн чупрăм çав, каçар мана. Халĕ пĕр саншăн çеç пĕтĕм пурнăçа парăттăм...

Çак сăмахсене илтсен пит тăрăх тăварлă куççуль йăлтăртатса анчĕ. Кун пеккине кĕтменччĕ.

– Леня, эпĕ сана тахçанах каçарнă. Халĕ тин пулни-иртнине асăнар мар. Эсĕ часрах сывалма тăрăш-ха... Маншăн та пулин.

– Саншăн-и? Саншăн тăрăшатăпах! – унăн хăмăр куçĕ çутă шанчăкпа хĕмленсе вут сапрĕ. – Эсĕ ман пата кашни кун килетĕн-и?

– Сăмах паратăп: килетĕпех!

Çапла куллен район больницине çӳреме тытăнтăм. Килте çула пуçтарăннă чухне кашнинчех шиклĕх «хурчĕ» чуна кăшлатчĕ: Леньăна тепре кураятăп-и, хавшаса çитнипе куçне ĕмĕрлĕхех хупмĕ-и?

Телее, шăпа пире шеллерĕ. Вăл виçĕ уйăхран больницăран сывалса тухрĕ. Тепĕр çур çултан мана алă çинче йăтмаллах çирĕпленсе çитрĕ. Эпĕ куншăн питĕ хĕпĕртерĕм. Унпа курнăçма пуçланăранпа пурнăçăм кăна мар, чун та улшăнчĕ. Пач палламан çыннах ырă тăвас килнĕ пек... Хама унччен Леньăн юратăвне шанни çитменнине тинех тавçăртăм. Халĕ иксĕмĕр те телейлĕ. Нумаях пулмасть хут уйăрттарсах пĕрлешрĕмĕр.

Леня хăй авланса уйрăлнине, вăрах вăхăт ĕç тупайманнипе эрех ĕçме пуçланине каласа пачĕ. Хăй самаях ӳсĕррине пăхмасăрах черетлĕ хут руль умне ларсан вăл машинине пысăк хăвăртлăхпа хăвалана май юпана пырса çапнă. Çавăнпах йывăр суранланнăскер больницăна лекнĕ. Унтанпа савни «çуттине» шăршласа та пăхмасть.

– Çапах та çав «симĕс çĕлен» сана шыраса тупма пулăшрĕ-ха, – шӳтлекелет хăш чухне савнă мăшăрăм. – Больницăра çеç санран каçару ыйтма хал çитертĕм вĕт. Çавна май тĕнчери чи лайăх хĕрарăм кăмăлне çаврма пултартăм! Чи хӳхĕм чиперукпа савăнса пурăнатăп халĕ! – тет вăл мана ăшшăн çупăрласа.

**Елена САВАТЬЕВА.**
Муркаш районĕ.

ШĂПА

# Упăшка юратма пăрахрĕ

Анук тĕлĕк курса выртать. Шаккасçĕ пек. «Ай, тур! Михала çитрĕ пулас. Уçас часрах», – алăк патнелле ыткăнчĕ пек, упăшкине ыталама хăтланчĕ, анчах арçын хура кайăка çаврăнчĕ те чӳречерен вĕççе тухса кайрĕ. Анук хăранипе шартах сиксе вăранчĕ. Чăнах та алăка шаккасçĕ иккен. Ай-уй, ку Михалах ĕнтĕ.

Вăл çапла, иккĕшĕ кăна пĕлмелле, шăкăртаттаратчĕ. Хĕрарăм алăка хыпаланса уçса ячĕ. Епле савăнăç – упăшки салтакран таврăннă! Анчах Михала арăмне ыталаса чуп тăвас вырăнне ятлама пикенчĕ: «Мĕншĕн час уçмарăн, такама пытаратăн-им?» – кăмăлсăрланчĕ ӳсĕрскер. Анук ăна хирĕç нимĕн те чĕнмерĕ. Арçын унран маларах пӳрте кĕрсе кайрĕ, пӳлĕмсене пăхса тухрĕ. Шăп. Ачи çеç тутлăн çывăрать. Хĕр пĕрчи хăйĕн сăнлă çуралнăшăн хĕпĕртерĕ ашшĕ. «Кампа эрех ĕçрĕн эсĕ?» – урлă-пирлĕ калаçрĕ Михала. «Йĕркеллĕ пул-ха. Эпĕ пĕр тумлам та ăша яман. Эсĕ хăв хĕрĕнкĕ вĕт», – терĕ те Анук макăрса ячĕ.

Упăшкипе арăмĕ пĕр-пĕрне виçĕ çул курман пулин те тĕл пулу иккĕшне те савăнтармарĕ. Арçын юлашки вăхăтра çыру пачах ямарĕ. Халĕ те вăл хăйне мĕншĕн килпетсĕр тыткаланине Анук ăнланаймарĕ-ха. Ӳсĕр арçын салтăнмасăрах кравать çине тӳнчĕ те часах çывăрса кайрĕ. Çамрăк арăмĕн пичĕ тăрăх куççулĕ юхрĕ...

Михала салтака кайиччен Анук йывăр çын пулса юлчĕ. Çулталăк ытла чиперех çыру çӳретрĕç вĕсем. Пĕрлешиччен вĕсем иккĕшĕ те урăх савние çӳренĕ. Каччă Гальăпа туслăччĕ, Анук – Васçапа. Пĕррехинче вăйăра Михалапа Анук пĕрле ташларĕç, çав самантра пĕр-пĕрне килĕштерчĕç те часах çемье çаврăнчĕç. Васça çамрăклах ĕçкелеме тытăнчĕ, Галя та хăйĕн пурнăçне йĕркелеймерĕ. Малтанхи савнийĕн телейĕ ăна питĕ вĕчĕрхентерчĕ.

Михала салтака кайсан Галя унăн адресне тупрĕ, Анук çинчен элеклесе çырусем яма тытăнчĕ. «Арăму арçын хыççăн арçын улăштарать», – çырчĕ кĕвĕç чунлăскер. Çак хыпара вуласан Михала аппăшне тĕрĕссине пĕлтерме ыйтрĕ. «Ку йăлтах суя, ан ĕнен, кин тĕрĕс-тĕкелех пурăнать», – хуравларĕ тăванĕ. Çапах та салтак чунне иккĕленӳ кĕрсе вырнаçрех. Çавăнпа та Анука тĕрĕслес тĕллевпе юриех килне çĕрле пырса кĕчĕ. Унччен юлташĕ патне кĕрсе хăналанчĕ.

Михалан хĕрӳ туйăмĕ сĕвĕрĕлме ĕлкĕрнĕ иккен. Арăмне вăл ачашлăх парнелеймерĕ. Ялан хирĕçрĕ, чăкăлташрĕ, мăшăрĕ пĕçернĕ апата тиркерĕ. Киле час-часах ӳсĕр таврăнчĕ арçын. Галя Михалана тăтăшах эрех ĕçтерчĕ. Ӳсĕрскере хăйĕн патĕнче çĕр вырттарчĕ, Анук пирки евитлерĕ.

Пĕррехинче Михала никама ним каламасăр ялтан тухса кайрĕ. Вăл ăçтине никам та пĕлмерĕ. Унтанпа нумай çул иртрĕ. Çухалнă упăшкине Анук кĕтсе илеймерĕ, тĕпренчĕкне пĕччене ӳстерчĕ. Çирĕме çитсен хĕрĕ качча тухрĕ. Анчах çак куна амăшĕ кураймарĕ. Ялан хуйхăрнипе чире кайса вилчĕ.

Анук ку тĕнчерен уйрăлнă хыççăн Михала тăван килне пырса курчĕ. Ытарма çук чипер хĕрне ыталаса йĕчĕ, каçару ыйтрĕ. Çавăнтанпа çыхăну тытаççĕ вĕсем. Хĕрĕпе кĕрӳшĕ ашшĕ патне хăнана та кайса курчĕç.

Гальăн кун-çулĕ ăнмарĕ. Темиçе арçын та улăштарчĕ вăл, анчах пĕри те унпа тĕпленсе пурăнаймарĕ. Ача çуратайман хĕрарăм ватлăхра пĕччене тăрса юлчĕ. «Çын куççулĕ çинче телей кураймăн» теççĕ, тĕрĕсех иккен...

**Нина СТЕПАНОВА.**
Йĕпрес районĕ.



Левтина МАРЬЕ

# Хурăнлăхра асамлă вырăн

**/икĕ пайлă, 6 курăнуллă драма/**

**/Малалли. Пуçламăшĕ 44-47-мĕш номерсенче/.**

АЛЕКСАНДР ИЛЬИЧ. Çарла... вăштăр-ваштăр, çын тени вăл ĕмĕр тăршшĕпех юратса пурăнасшăн. Унсăр мĕнле-ха? Чуна тунсăх пуссан пурăнма та кичем, сывлама та йывăр...

САША /*кĕнекине уçса шăппăн вулать*/. Питĕ интереслĕ çыратăр...

АЛЕКСАНДР ИЛЬИЧ /*мăн кăмăллăн*/. Пĕрерĕшне вулăрха.

САША. О, эпĕ сирĕн пек вулаяс çук. Тархасшăн, хăвăрах вулăр.

АЛЕКСАНДР ИЛЬИЧ.

Юратас килет!
Эп авлантăм пилĕк хут,
Юраймарăм нихăшне те.
Авланасчĕ тепĕр хут,
Çавăрнса пăхмасть пĕри те.

Пилĕк арăм, ачи вуннă,
Çирĕм виç мăнук тата.
Юрату хăвачĕ сÿннĕ,
Ватлăх çитрĕ ман пата.

Эп вăй хутăм вунă çул!
Çанă тавăрсах ĕçлерĕм.
Тивĕçтерейрĕм пуль,
Пысăк пенси илеймерĕм.

Туяпа çÿрекелетĕп,
Ларкалатăп сак çинче.
Шухăшлатăп, ÿкĕнетĕп,
Çÿç юлмарĕ пуç çинче.

Эх, ман çамрăклăх ăçта-ши?
Автан пек сикес килет!
Туяна ывтам–ши?
Халь те юратас килет!
Кхм! Кхм!

УЛЬККА /*хурăн хыçĕнчен тухса*/. Ай, сăвви те вара!

САША. Ульккa аппа! Александр Ильич чăн-чăн çыравçă!

АЛЕКСАНДР ИЛЬИЧ /*мухтанкаласа*/. Ара, ун пекех мухтамалла марччĕ...

УЛЬККА. Э-э... Çапла-и-ха?.. Кăна эсир хăвăр çинчен çыратăр пулĕ ĕнтĕ...

АЛЕКСАНДР ИЛЬИЧ. Тьфу! Вăт, Сашенька, ялти карчамассем çапла: те недоразвитăй вĕсем, те тăррисем шăтăк.

УЛЬККА /*Саша еннелле пăхса*/. Мĕннисем шăтăк терĕ вăл?

САША /*иккĕшĕн хушшинче ним тума аптраса*/. Ульккa аппа, эсир ăнланмарăр пулĕ...

АЛЕКСАНДР ИЛЬИЧ. Карçинкку шăтăк тетĕп, карçинкку... Вăт достала!.. Вăштăр-ваштăр!.. /*Сехечĕ çине пăхса*/. Сашенька, тепре куриччен! /*Хăвăрт утса каять*/.

САША. Сывă пулăр, Александр Ильич!

УЛЬККА /*карçинккине çавăра-çавăра пăхать*/. Хăть те пин шăтăк пулсан та ку «вăштăрваштăра» мĕн ĕç-ши? Катăк пуç... Кутĕнчен пĕрре пит хытă лектересчĕ туйипе...

ВЕРА /*купăс тытнă, хашкаса чупса çитет*/. Паян сире шыраса чун тухать ĕнтĕ. Çтаппан пичче! Кунта вĕсем! Килĕр!

УЛЬККА. Мĕн пулнă вара?

ВЕРА /*купăсне сак çине лартса*/. Манса кайрăр-им вара? Кузьминсем паян хăйсен «ылтăн туйне» ирттерессĕ вĕт-ха.

УЛЬККА /*тирпейленет. Саппунне салтса тепĕр майлă çыхать*/. Э-эй, çын туйĕшĕн мĕн шухăшласа пуçа ватас?..

САША. Ан кулян, Вера, пĕтĕмпех майлаштаратпăр. Пĕрремĕш хут мар-çке.

**Степан Игнатьевичпа Кĕтерне чупса килеççĕ. Иккĕшĕ те туй тумĕсемпе. Кĕтерне Ульккa патне чупса пырса пуçне хушпу тăхăнтартать. Степан Игнатьевич купăс тытса тăсса ярать.**

ВЕРА. Халь кунта пĕрер çавра юрласа тухар та вара кайса саламлар, унсăрăн унта пирĕнсĕр пуçламаççĕ.

**Ульккапа Кĕтерне пуçлаççĕ, хушса юрламаллине пурте пĕрле ташла-ташла шăрантараççĕ.**

Ылтăн çĕрĕ
Ылтăн çĕрĕ туянатăп
Хаклă мăшăрăм валли.
Ма тесессĕн юрататăп,
Илĕртет ун йăл кулли.

Хăмăр куçăм, çăлтăрăм,
Хаклă мăшăрм эс ман.
Кĕмĕл тĕслĕ уйăхăм,
Эп телейлĕ эс пулсан.

Унпала кăшт харкашсассăн
Йывăр манăн чунăма.
Мирлешсе чуп-чуп тусассăн,
Питĕ лайăх пурăнма.

Мăшăр кăмăллă пулсассăн
Таш ташлассăм ман килет.
Ăшшăн куçăмран пăхсассăн
Чун-чĕреçĕм ирĕлет.

Хăмăр куçăм, çăлтăрăм,
Хаклă мăшăрăм эс ман.
Кĕмĕл тĕслĕ уйăхăм,
Эп телейлĕ эс пулсан.
ВЕРА. Пулчĕ! Кайрăмăр!

**Пурте пĕр еннелле ташла-ташла каяççĕ, курăнми пулаççĕ. Тĕттĕмленет. Уйăх тухать. Егор Кузьмич тайкаланса килни курăнать. Вăл питĕ хурлăхлă. Сак çине пырса ларать.**

ЕГОР КУЗЬМИЧ. Эх, пурнăç... Мĕншĕн çав тери телейсĕр-ши эпĕ? Яш чухне çунса тăракан юратăва вĕçертрĕм. Кулянниpe юратман хĕрпе çемье çавăртăм та унпа та телейлĕ пулаймарăм. Юратни те апла, юратманни те капла... Ах!.. Çунакан ăша мĕнпе лăплантарам-ши? /*Сиксе тăрать*/. Атăла сиксе вилĕттĕм – ишме пĕлетĕп... Кайăксем тата... мĕне пĕлсе юрлатăр-ши?.. /*Хурăна ыталаса юрласа ярать*/.

Аса илÿсем....
Аса ил-ха, тусăм, иртнĕ
çулсене,
Еплерех илемлĕ ирччен
тăнине,
Чечексем сана эп
парнеленине,
«Пĕр-пĕрне саватпăр ялан»
тенине.
Хушса юрламалли:
Ăçта-ши çухалчĕç
Хĕрÿ сăмахсем?
Канăçа хускатрĕç
Аса илÿсем...

Яштака, илемлĕ, сăну пит
хитре,
Юрату хĕлхемĕ юлчĕ чĕрере.
Куç пулсан чупаттăм хурăн
патнелле,
Сана ыталаттăм юратнипеле.
Хушса юрламалли.
Ман сана курасчĕ кампа
утнине,
Еплерех, пĕлесчĕ,
тунсăхланине.
Тен, телейсĕр эсĕ? Эпĕ те
пĕччен...
Сукмакпа тухасчĕ хирĕç
ик енчен.
Хушса юрламалли:
Ăçта-ши çухалчĕç
Хĕрÿ сăмахсем?
Канăçа хускатрĕç
Аса илÿсем.

**Егор Кузьмич ерипен утса сак çине кайса ларать. Софья Юрьевна хурăнлăхри сукмакпа утса килет. Егор Кузьмича асăрхасанах тăп! чарăнса тăрать те йывăç хыçне пытанать.**

ЕГОР КУЗЬМИЧ. Çук, паян та эсĕ сана тĕл пулаяс çук ĕнтĕ, ăçти сукмакпа иртсе çÿретĕнши, Софьюшка? Сансăр манăн пурăнас та килмест. Килте пушшех чуна тăвăр… Луччă çакăнтах выртатăп та сывăратăп… Тен, çăлтăрсен айĕнче савнă хурăнлăхра тĕлĕкре те пулин курăнăн. /*Сак çине выртать те çавăнтах сывăрса каять*/.

**Софья Юрьевна çывăхнерех пырса тăрать. Ун çине юратса та кулянса пăхать.**

СОФЬЯ ЮРЬЕВНА /*ним тума аптраса*/. Ах, Егор, Егор, киле çитиччен те пулин утмаллахчĕ, капла эсĕ шăнатăн та пулĕ, вара чирлесе те кайăн. Сана нимпе те пулăшайманнипе мана сĕре йывăр. Кайса калама та аван мар, мĕн тумалла-ши?.. /*Çамрăксем кулни илтĕнсе каять*/.

Кунталла такам килет пулас... /*Хурăн хыçне пытанать*/.

**Романпа Вера килеççĕ. Вĕсем ыталаннă, тем çинчен шăппăн калаçаççĕ те çавăнтах кулса яраççĕ.**

ВЕРА. Тăхта-ха, Рома, ку сан аçу мар пулĕ те? Пăх-ха лайăхрах. Вăлах вĕт.

РОМАН. Атте?! /*Тĕксе вăратасшăн*/. Атте тетĕп. /*Тарăхса*/. Тьфу! Путсĕрскер!

ВЕРА /*Софья Юрьевна утса кайнине асăрхать*/. Рома, эпĕ сан аçуна çав тери шеллетĕп.

РОМАН. Çавнашкал ÿсĕрĕлсе ăçта кирлĕ çавăнта кайса ÿксе çывăрма пуçласан ăна тата шеллесе тăмалла-и-ха манăн? Атте! Тăр тенĕ сана! Сана пула мана намăс!

ВЕРА. Аçуна, тархасшăн, ан вăрç!

РОМАН /*Верăна*/. Эс те пулин ан тарăхтар-ха!

ВЕРА. Вăл ватă çын мар вĕтха. Софья Юрьевна та пĕччен хĕрарăм...

РОМАН. Эсĕ ун çинчен урăх çăвар та ан уç...

ВЕРА. Эсĕ, Ромочка, манпа юратсах çÿретĕн-и е ахаль кăна-и?

РОМАН. Пирĕнпе вĕсене ан танлаштар-ха...

ВЕРА. Сан аннÿн вил тăпри, паллах, çăмăл пултăр. Эпĕ ăна çав тери хисеплеттĕмччĕ. Мĕн тăвăн-ха, енчен те çапла пулса тухрĕ пулсан...

РОМАН. Атте те пулин тем пĕлсе ĕçет! Час-часах киле ÿсĕр таврăнакан пулчĕ.

ВЕРА. Енчен те кун пек ĕçке кайсан унсăрăн та тăрса юлма пултаратăн.

РОМАН. Ах, анне!..

ВЕРА. Манăн та атте вилни пилĕк çул çитрĕ. 40 çулта тăрса юлнă аннене пĕччен ларса кулянните тата хăш-пĕр чухне макăрнине курма мана питех те йывăр. Енчен те лайăх кăмăллана çынна тĕл пулсан тепре качча тухтăрахчĕ тетĕп. Мĕншĕн тесен эпир, ачисем, хамăр йăва çавăрма тăрăшатпăр. Вĕсене те шăкăл-шăкăл калаçма, пĕр-пĕрне пулăшма пурнăçра юлташ кирлĕ...

РОМАН /*Верăна ыталаса*/. Верочка, чунăм, юрать-ха эсĕ пур...

ВЕРА. Атя, Рома, аçуна вăратса киле илсе çитерер.

РОМАН. Атте, тăр, тăр, атте, киле кайăпăр...

ЕГОР КУЗЬМИЧ /*куçне уçса*/. Роман, ку эсĕ-и? /*Тăрса ларать*/.

РОМАН. Эпĕ, эпĕ. Эпир Верăпа иртсе каяттăмăрччĕ те...

ЕГОР КУЗЬМИЧ. Питĕ лайăх. Эсир, ачасем, яланах пĕрле пулăр... Эпĕ кунта мĕнле çывăрса кайнă-ши?

ВЕРА. Хурăнлăхра уçă сывлăшпа кăшт канса илни вăл сĕре лайăх. Атьăр, Егор Кузьмич, халĕ килелле уттарар-ха.

ЕГОР КУЗЬМИЧ /*çамрăксенчен тытса*/. Кайрăмăр, ачасем. /*Утаççĕ*/. Рома, ывăлăм, сан ĕçре чиперех-и?

РОМАН. Чиперех, атте.

ЕГОР КУЗЬМИЧ. Сан сессине каймалла марччĕ-им-ха?

ВЕРА. Нумай пулмасть кăна кайса виçĕ эрне пурăнса килчĕ.

ЕГОР КУЗЬМИЧ. Э... тата... чăнах та-иç. Çавна та манса кайрăм-и-ха эпĕ?..

**Виççĕшĕ те утса курăнми пулаççĕ.**

**/Малалли пулать/.**

ПРЕМЬЕРА

# Мунча чуна тасатать-ши?

**К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи театрĕ Арсений Тарасов пьесисем тăрăх тăваттăмĕш спектакль сцена çине кăларчĕ. «СССР халăх артисчĕпе Валерий Яковлев режиссерпа пĕр-пĕрне ăнланса ĕçлетпĕр. Вăл манăн шалти тĕнчене никамран лайăх туять. Эпĕ вара ăна мĕнле пьеса кирлине пĕлетĕп», – çирĕплетет Арсений Алексеевич. «Мунча кунĕ» ĕç те ăнăçлă пулса тухнă.**

Пьеса авторĕ паянхи ял пурнăçне кăтартнă. «Хамăн анне шăпине сăнлас килчĕ. Унăн та, спектакльти сăнар пекех, ватлăх енне сулăнсан килте пĕччен пурăнма тиврĕ. Çакăншăн эпир, унăн тĕпренчĕкĕсем, нумай куляннă. Вăл икĕ ывăлĕпе хĕрĕ патне Шупашкара та, Мускава та, урăх яла та куçма килĕшмерĕ. «Тăван килтен тухмастăп», – тетчĕ ялан. Çакна РСФСР халăх артистки Нина Яковлева çав тери ĕнентерÿллĕ кăтартрĕ. Манăн анне тăлăх çитĕннĕ, хутла вĕренмен. «Сас паллисене пĕлнĕ пулсан çыру шăрçалăттăм, эсир çырнине вулăттăм», – чунне усатчĕ вăл. Унпа юнашар пулайманшăн хамăра айăплă туйнă», – палăртать Арсений Тарасов. Пур пĕрех пурнăç тилхепине алăран вĕçертесшĕн мар тивĕçлĕ канурисем. «Анне çитмĕлтен иртсен те хуралтăсене çĕнĕрен тутарчĕ. «Кайран сире кирлĕ пулĕ. Леш тĕнчене каясси пирки шухăшласа пурăнмалла мар», – тетчĕ», – каласа кăтартать драматург.

Ватăсемшĕн пенси укçи мар, юнашар çын пурри, кирлĕ вăхăтра пулăшни пĕлтерĕшлĕрех. Спектакльте чĕлхесĕр Мисаил /Евгений Урдюков/ – ялăн хĕртсурчĕ вырăнĕнче. Пĕччен пурăнакансене пăхса тăрать вăл: шыв ăсса килет, килтен тухсан каялла çул çухатасран сыхлать. Айванскер çыннăн чун ыратăвне туйни кашни самантрах палăрать. Ваттисен кăмăлне уçассишĕн тем тума та хатĕр вăл. Çакăншăн вак укçа парса тав тăваççĕ ăна. Çук, унăн пулăшăвне хакламаннипе е хутлине шелленипе çыхăнман ку. Вак укçа чăнкăртатăвĕ йăпатать çамрăка. Сăмах май, Мисаилăн амăшне ашшĕ бензин сапса чĕртсе янă. Шăпах çак киревсĕрлĕх хыççăн улшăннă вĕсен ывăлĕ. «Пирĕн ялта та çакăн евĕрлĕрех тĕслĕх пулнăччĕ. Аттепе киле таврăннă чухне пĕр пахчара çунакан хĕрарăм чупнине курнăччĕ. Пьесăра шăпах çак саманта аса илнĕ», – уçăмлатать автор.

Кĕтерука /РСФСР халăх артистки Нина Яковлева/ ватлăхра Виталипе /Сергей Павлов/ Георгин /Чăваш халăх артисчĕ Вячеслав Александров/ пăхмалла-ха та... Анчах вĕсен яла пырса çÿреме вăхăт сахал. Шăпа çавнашкал çавăрса килни амăшне те, ачисене те кулянтарать. Анчах лару-тăрăва улăштарма хал çитерейменççĕ вĕсем. Ваттисен çурчĕ тавра та сăмах пуçарасçĕ вăй питти арçынсем. Анчах чун парнеленĕ хĕрарăм унта хăйне хĕтлĕ туйманнине чухлаççĕ, паллах, вĕсем.

ЧР тава тивĕçлĕ артистки Елизавета Хрисанфова шанăçне çухатнă, эрехре çăлăнăç шыракан хĕрарăма вылять. Усал йăларан хăтăлĕччĕ, анчах туртса кĕртекен шурлăхран тухма вăйĕ юлман унăн.

Çапах ялта ырри те çук мар. Çамрăксем пÿрт хăпартаççĕ, ача çуратаççĕ, телейлĕ малашлăха шанаççĕ...

Марина ГРИГОРЬЕВА.

# Дмитрий Нагиев хăнасене хапăл мар



**Хваттерти чи вăрттăн кĕтес – çывăрмалли пӳлĕм. Ăна пурте ют куçран сыхлама тăрăшаççĕ, унта тинех пĕтĕм тĕнчерен пытанса хăвăн шухăш авăрне никамран хăрамасăр путма пулать. Паллă çынсемшĕн пушшех те кăтартуллă çакă – вĕсем çапах та яланах халăх умĕнче-çке. Кунĕпе пин-пин куç пăралать вĕсене. Çакна пула урама-мĕне тухсан хăйсене яланах алăра тытма тивет вĕсен. Çăлтăрсем çывăрмалли пӳлĕмĕсене тăрăшсах капăрлатнинчен çавăнпах тĕлĕнме кирлех мар-тăр. Пĕрисем пĕчĕк сĕтелсене вышкайсăр пысăк хакпа туянаççĕ, крокодил тирĕпе витеççĕ, теприсем Инди махараджинчен пĕрре те кая мар интерьер суйлаççĕ...**



"Comedy Ciub" резиденчĕ **Гарик Мартиросян** ача чухне художник пулма ĕмĕтленнĕ. Ĕмĕтне пурнăçа кĕртес тесе тăватă çул вĕреннĕ те. Çапах та Мускаври хваттерĕн дизайнне арăмне шанса панă. Жанна профессионал дизайнер мар, çапах унăн ĕçĕпе Гарик та, хĕрарăм хăй те кăмăллă. Уйрăмах – çывăрмалли пӳлĕмпе. Тем пысăкăш тата йывăрăш хрусталь люстра илем кӳрет ăна, тĕкĕрсен шучĕ те çук, ахаль обой вырăнне парча, атлас, пурçăн тата плюш çыпăçтарнă стена асамат кĕперĕн пур тĕсĕпе те ялкăшать. Тĕп вырăн, паллах, кравать йышăнать. Ун çинче чалма тăхăннă шейх выртать тейĕн...

**Анастасия Заворотнюк** нумаях пулмасть Ялтăра тинĕс хĕрринчи çĕнĕ çуртра юнашар вырнаçнă икĕ хваттер туяннă. Пĕринче упăшкипе, Петр Чернышев фигуристпа иккĕшĕ, пурăнаççĕ, тепринче – ачисем, Аньăпа Майк. Аньăн çывăрмалли пӳлĕмĕ куçăм тапхăрĕнчи хĕр психологине сăнлать: ку вăхăтра чиперуксем çутă тĕссене кăмăлласах каймаççĕ, çи-пуç та хурине кăна суйлаççĕ. Амăшĕ хĕрĕн кăмăлне шута илнĕ курăнать: пӳлĕмре стенасем те, тюль те – шурă тĕслĕ, сĕтел-пукан, чӳрече карри, люстра – хура. Чи варринчи тем пысăкăш кравате те хура çиттипе витнĕ. Хăтлăскер çинче пӳлĕм хуçи кăна мар, пĕтĕм çемье йăванма кăмăллать.

**Дмитрий Нагиевăн** хула тулашĕнчи тăватă хутлă çурчĕ /Санкт-Петербург/ 500 тăваткал метр йышăнать. Çакăн пысăкăш керменте çывăрмалли пӳлĕм пĕрре кăна. Актер, хăй палăртнă тăрăх, хăнасене юратмасть. Ĕç хыççăн килне питĕ хытă ывăнса таврăннине пытармасть вăл, кун пек чухне вара пуçра пĕртен-пĕр шухăш: ăна канмашкăн никам та ан чăрмантартăр. Çавăнпа та хăнасем валли ятарлă пӳлĕмсем çук ку çуртра. Çывăх тăванĕсем валли вара диван çителĕклех, вĕсене çуртра унта та кунта вырнаçтарса тухнă. Нагиевăн çывăрмалли пӳлĕмĕнче вара пĕр-пĕринпе пачах та килĕшсе тăман стильсене пĕрлештернĕ: пур çĕрте те пĕччен арçынла хай-тек, мачча çинче çеç Чĕрĕлĕх палли – хĕрпе каччă чуп тунине савăнăçлă пирĕштисем сăнаççĕ... Хусах валли шăпах ĕнтĕ...

**Алла Довлатова** яланах авса тунă кравать çинчен ĕмĕтленнĕ. "Пуçа



килнине вара эпĕ пурнăçлама хăнăхнă", – йăл кулать телеертӳçĕ. Çак ĕмĕте те пурнăçа кĕртме пултарнă хĕрарăм. Çывăрмалли пӳлĕмри ытти сĕтел-пукана та çак стильпех килĕшӳллĕн пуçтарнă пулин те Довлатовăшăн кравать – тĕп вырăнта. "Чи кирли – вăл питĕ меллĕ", – савăнать хĕрарăм. Пӳлĕмри обойсен ӳкерчĕкĕсем чӳрече каррисемпе килĕшӳллĕ – вĕсене пĕрлех сутнăмĕн. Каярахпа актриса çак пусмаранах кравать виттине çĕлеттернĕ. "Ленсовет илемлĕх ертӳçи Игорь Владимиров мана тахçан кĕрен тĕспе туслашма сĕннĕччĕ – çамрăклăха тăсать иккен ку. Эпĕ вара сирень тĕсли патĕнче чарăнтăм та иртсе каяймарăм. Юрĕ ĕнтĕ, кĕреннинчен пит аякрах мар вăл".

**Надежда Кадышевăн** çывăрмалли пӳлĕмĕ такама та ăмсантарĕ – темиçе çул каялла унăн мăшăрĕ Александр Костюк Итали дизайнерĕнчен Онофрио Юкуланоран пулăшу ыйтнă. Лешĕ вара пĕтĕм шухăшне ирĕке вĕçтернĕ. Çывăрмалли пӳлĕм урайне олива йывăççинчен сарнă, ăна хаклă чулсемпе илемлетнĕ. Обойсем – пурçăнран, чӳрече янаххи – мрамортан, сарлака шап-шурă кравате ылтăнпа илемлетнĕ, ăна корольшĕн кăна юрăхлă атласпа витнĕ. Кермен стилĕ Кадышевăн çывăрмалли пӳлĕмĕнче кăна мар – хваттерĕпех. "Юсав ĕçĕсем пынă чухне эпир кунта пачах та килсе çӳремерĕмĕр. Килсе курсан куç-пуç алчăраса кайрĕ. Шик! Кайран вара виçĕ кун хваттертен тухмасăр çак илемпе киленсе выртрăм. Халĕ те ку кравать çинче хама королева пек туятăп".

**Вика Цыганова** çывăрмалли пӳлĕме хваттерти тĕп вырăнпа танлаштарать. Çавăнпах ăна валли чи пысăк та çутă пӳлĕме уйăрнă вăл. Интерьер тата декор авторĕ – юрăçăн мăшăрĕ Вадим Цыганов. Çывăрмалли пӳлĕмри сĕтел-пукана йăлт авса тунă тимĕртен пухнă, ăна вара кĕмĕл тĕспе витнĕ – XIX ĕмĕрти колонизаторсен стилĕ. Ăна çăвăнмалли пӳлĕмрен чаршавпа кăна уйăрнă – театрти пек. Ваннăра çăвăннă май, чаршава уçса хурсан, телевизор пăхма пулать. Арçын туйăмсене сивĕнме памасть – Вика вăраннă тĕле кравать пуçĕнче яланах чĕрĕ чечек çыххи, кашни ир урăххи, ырă шăршине сапалать.



**Анастасия Мельникова** юсав ĕçĕсене вĕçленĕ хыççăн чи малтан хĕрĕн пӳлĕмне йĕркелеме пикеннĕ. Хăй урайĕнче çур çул матрас çинче çывăрса пурăннă, хĕрне чаплă кравать парнеленĕ. Тата мĕн чухлĕ йăванатчĕ-ши вăл урайĕнче – анчах та Настя пĕррехинче лавккара шупка кĕл чечек тĕслĕ кравать курнă. Анчах та хакĕ! 17 пин евро! Çапах та Настя алă усма хăнăхман. Питĕре таврăнсан вăл паллакан реставраторсемпе çыхăннă,



лешсем ăна шăп çавăн пек кравать туса панă, анчах та – тем чухлĕ йӳнĕрех. Ачаранпах тĕрлекен Анастасия çивиттине хăех хитрелетнĕ. Аллине йĕппе çип фильм ӳкернĕ вăхăтра кăна тытать вăл. Пĕр ĕç валли 4-5... сери кирлĕ. "Çутă улăштарнă, пĕр объектран теприне куçнă, япаласене пухнă хушăра эпĕ тĕрлетĕп, – йăл кулать актриса. – Питĕ хăвăрт лăплантарать ку. Ĕçсене пурне те тенĕ пек парнелетĕп. Малтанхисене тата пепкем 2,5 çулта чух тунă пĕрремĕш çĕвве асăнмалăх упратăп".

**Жанна Фриске** хваттерĕнче искусствăллă пĕр япала та çук – пластик та, синтетика та. Пӳлĕмсене хăтлăх кӳрес енĕпе юрăçăн дизайнерĕ ĕçленĕ. "Вăл манăн кăмăла тӳрех ăнланчĕ, – тет Фриске. – Унăн профессионализмне шаннăшăн пĕрре те ӳкĕнместĕп. Проектра та нимĕн те улăштармарăм. Пĕррехинче вăл художниксен пĕр ушкăнне ертсе килчĕ те: "Çывăрмалли пӳлĕмре картина пулать", – терĕ. Мĕн ӳкерĕç унта – çакна та ыйтмарăм. Ĕçе вĕçлесен вара питĕ савăнтăм – манăн ĕмĕтсене сăнланă унта!" Жаннăн çывăрмалли пӳлĕмĕ балконпа тата ваннăй çумĕнче, çакă та юрăçа питĕ килĕшет. "Питĕ меллĕ ку, – палăртать Жанна. – Унсăр пуçне ман пата юлташсем тăтăш килеççĕ, эпир вăхăта ытларах балкон çинче ирттеретпĕр. Çакна валли эпĕ ятарласа ăшă урай хатĕрлеттертĕм, меллĕ сĕтел-пукан вырнаçтартăм, стена çине вара картинăсем çакрăм – çапла вара веранда пулса тăчĕ". Çывăрмалли пӳлĕм урайне юман хăма сарнă. "Манăн хваттере пăхса тăма çăмăл мар. Урайне нӳрĕ татăкпа кăна сăтăрмалла, унсăр пуçне ятарлă препаратсемпе сирпĕтмелле, – Жанна сассинче кăмăлсăрланни те палăрать. – Хваттерте эпĕ кавирсем çакмарăм, çывăрмалли пӳлĕмре кăна çӳхе çăм палас сартăм". Кравать те юрăçшăн меллĕ пулнипе палăрса тăмалла: "Диагональпе, эпĕ хăнăхнă пек, çывăрма май килтĕр". Çывăрмалли пӳлĕм валли сĕтел-пукан Фриске Францире саккас панă, унăн пахалăхĕпе питĕ кăмăллă. Интерьерта, юрăç шухăшĕпе, чи кирли – хăтлăх.

/«7 Дней»/.







## И-ХИ-ХИК

Арçын канма кайнă. Хайхискер патне арăмĕ шăнкăравлать:
– Мĕнле эсĕ унта мансăр?
– Аптрамасть. «Эпĕ – авланнă арçын», – тесе çырнă труççи туянтăм.
– Кама кăтартатăн вара ăна?

* * *

Пĕр арçын – теприне:
– Итле-ха, эсĕ манăн юлташ вĕт, çапла-и? Калăпăр, иксĕмĕр вăрмана кайнă. Эпĕ упана тĕл пулнă та унран таратăп. Эсĕ мĕн тăвăттăн?
– Тепĕр еннелле чупăттăм.
– Анчах эсĕ манăн юлташ вĕт-ха. Лайăхрах шухăшласа пăх-ха.
– Тĕмсен хушшинче пытанса юлăттăм.
– Ну, Гиви, эсĕ камăн юлташĕ: манăн-и е упан-и?

* * *

– Студент, эсир киле панă ĕçе пурнăçланă-и?
– Çук.
– Мĕншĕн?
– Вăхăт пулмарĕ.
– Хĕрсем-и?
– Çук.
– Студент, манăн тем сирĕн пирки лайăх мар шухăшсем çуралма пуçларĕç...

* * *

Арăмĕ – упăшкине:
– Пирĕн кӳршĕ каллех тĕрмере пулас.
– Мĕншĕн ун пек шухăшлатăн?
– Эпĕ ун арăмĕнчен ыйтрăм та упăшки хăçан таврăнасси пирки, календарь çине пăхса шутлама пуçларĕ...

* * *

Чукун çул урлă каçмалли çĕрте питĕ вăрăм пăкă – машинăсем пухăннă. Пурте тенĕ пек кăшкăртаççĕ. Будкăран старик тухать.
– Чăтăмлăрах пулăр, ачасем, пуйăс 5 сехет каярах юлса килет.

* * *

– Куратăп-ха, тӳмӳсем пурте вырăнта – авланнă арçын пулни тӳрех курăнать.
– Чап-чап уйăхĕнче мана арăм чи малтан çак ĕçе вĕрентрĕ.

* * *

Старик ылтăн пулă тытнă.
– Арăму чĕрех-и? – ыйтать пулă.
– Пурăнать-ха.
– Апла тăк тӳрех ăшала мана...

* * *

Арçын метрора хуçасăр сумка асăрханă, çакăн пирки кирлĕ çĕре пĕлтернĕ. Милиционерсем унтан хура вăлчапа пĕр пачка доллар кăларсан арçын чăтса çитереймен, айăпа хăй çине илнĕ.

* * *

– Кам унта?
– Печкин почтальон! Ывăлăр валли повестка илсе килтĕм!

* * *

Статьяран:
– Пирĕн хулара текех нимĕнле преступлени те пулмĕ: ĕнер юлашки хураха темĕнле маньяксем вĕлернĕ...

* * *

– Официант! Эпĕ лимонпа какай саккас панăччĕ. Какайĕ ăçта?
– Лимон айĕнче.

* * *

Автобусра арçын мăкăртатса пырать:
– Хальхи çамрăксем йăлт пăсăлса кайрĕç. Сĕмсĕр, намăссăр... Ура çине тăрса вырăн парасси пирки шухăшламаççĕ те...
– Мĕн мăкăртатса пыратăр эсир – хăвăр та ларатăр вĕт-ха?
– Ман арăм тăрса пырать вĕт!!!

* * *

Пĕр ĕçкĕç – теприне:
– Атя пушмак валли шнурок илетпĕр.
– Мĕн тума?
– Çăватпăр кайран.

* * *

– Эпир арăмпа калаçса татăлнă: пĕр кун эпĕ туянатăп апат-çимĕç, тепĕр кун – вăл. Çапла вара пĕр кун ĕçетпĕр, тепĕр кун çиетпĕр...

* * *

– Арăмăр путнă чухне мĕншĕн пулăшма шухăшламарăр?
– Эпĕ вăл путнине ăнланман та. Яланхи пекех кăшкăрать те.

* * *

Çут çанталăк вăрттăнлăхĕсенчен пĕри: хĕрарăм 1 килограмм канфет çисех мĕнле майпа 5 килограмм самăрăлма пултарать?

* * *

– Эсĕ мĕншĕн хăв патна ĕçе авланнисене кăна илме тăрăшатăн?
– Хусахсем хăйсем çине кăшкăрнине юратмаççĕ.

* * *

– Анне, мăйракаллă жираф пăлан мар-и вара вăл?
– Ывăлăм, аçу çине пăх-ха... Мăйраки пур, анчах вăл пур пĕрех – ашак...

* * *

Самолетра адвокатпа юнашар сарă хĕр ларса пырать. Çул çывăх мар. Хĕр иллюминатор енне çаврăнать.
– Атя çула кĕскетмелле вылятпăр, – сĕнет адвокат. – Эпĕ ыйту паратăп, хуравлаймасан 5 доллар тӳлетĕр. Кайран эсир манран ыйтатăр, эпĕ вара хуравне пĕлмесен 500 доллар тӳлĕп.
Хĕр килĕшет.
– Уйăхран Çĕр патне çити миçе километр?
Хĕр чĕнмест, тӳрех 5 доллар тăсса парать. Унтан ыйтать:
– Ту тăррине виçĕ урапа хăпарать, каялла тăваттăпа анать. Кам вăл?
Адвокат тӳрех парăнмасть-ха, юлташĕсем патне шăнкăравлать, интернетра шырать – хуравне тупаймасть.
– Кам вара вăл? – ыйтать хайхи 500 доллар тăсса панă май. Хĕр 5 доллар тавăрса парать те иллюминатор енне çаврăнса ларать.

## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### П Р О Д А Ю

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка. Без вых. Т. 89875766562.

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные от производителя – недорого, **цемент.** Доставка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т.8-960-301-63-74.

**6.Песок, гравмассу, чернозём,** торф, **щебень,** кирпич. бой с доставкой. Т. 8-903-346-07-13.

**7.Кирпич** – разный, **песок, гравмассу, цемент.** Т. 89276678378.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 89051990122.

**11.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит. Д-ка. Т. 89276689713.

**16.Сетку-рабицу** от производ-ля: чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов; **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**17.Гравмассу, песок,** щебень, керамзит. Д-ка. Т. 89033583021.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**23.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. **Доставка.** Выездная сварка /генератор/. **Грузоперевозки.** Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**25.Гравмассу, керамблок, песок, щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.

**28.Гравмассу,** щебень, песок, **керамзит** – с доставкой до 30 т. за рейс, **бетон.** Скидки. Т.: 387015, 8-927-668-70-15.

**33.Гравмассу, песок, щебень,** гравий, **керамзит,** торф. Недорого. Доставка. Т. 89053465671.

**37.Гравмассу, песок, щебень.** Доставка. Т. 8-906-135-52-41.

**45.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ 20х20х40 – **33** руб., 9х20х40, 12х20х40; **кольца** колодезные всех размеров от производителя, по низким ценам – бурение, монтаж; песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, чернозем, КИРПИЧ в ассортименте. Д-ка. Т. 89196543499. Звоните!

**52.Пластиковые ОКНА,** железные **ДВЕРИ.** Замер. Доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: 8-917-652-96-94, 8-927-667-95-88.

**78.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое качество. **Низкие цены.** Доставка. Т. 89876734754.

**110.ОКНА** пластиковые, стальные **ДВЕРИ.** Замер, доставка – бесплатно. Скидки. Т. 89278404225.

**117.ОКНА ЧУВАШИИ:** пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 8-905-028-11-82.

**181.Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Найдёте дешевле – уступим. Без вых. Т. 89625989686.

**227.Пластиковые ОКНА, стальные ДВЕРИ.** Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. Т. 8-987-575-47-04.

**250.ОКНА пластиковые, железные ДВЕРИ.** Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

**509.Заборы, ворота, калитки,** скамьи кованые. Т. 89276689587.

**631.БЕТОН и РАСТВОР.** Дёшево. Доставка по ЧР. Т. 89373918648.

**676.Навоз, гравмассу, песок,** щебень. Д-ка 5 – 45 тн. **Услуги самосвала.** Т. 89278531670.

**693.Блоки керамзитные** от производителя, **пропаренные, легкие.** Т.: 89050284130, 89033462293.

**719.Блоки керамзитобетонные** пропаренные, вибропрессованные – недорого. Т. 89176776846.

**782.Керамблоки** 20х20х40. Доставка. Т.: 48-92-77, 8-903-389-90-38.

**842. СРУБЫ для бани.** Т. 37-28-74.

**874.Блоки керамзитобетонные** вибропрессованные, пропаренные. Дёшево. Т. 89373866629.

**881.Гравмассу, песок** речной, карьерный, **щебень** – доставка от 5 до 15 тн.; **керамблоки** от производителя. Недорого. Т. 89023282667.

**885.Отруби, зерно,** к/корм, сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

### УСЛУГИ

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 89373790080.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

### КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**587.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.

**843.Бычков,** коров, **тёлок,** овец, **свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

## ĔНЕНЕТĔР-И Е ÇУК-И?



# Кушак чĕлхипе...

- Кушак месерле выртса çывăрни – çанталăк ăшăтасса.
- Сăмсине пытарса çывăрать тĕк – сивĕтессе.
- Çулăм патне çурăмпа ларать – çанталăк пăсăласса.
- Çăвăнать – хăнасем килессе.
- Çăвăннă чух ури сивĕ пулни – кĕтмен е усал хăнана, ăшă тăк тăван е юлташваскать.
- Кушак çын сăмси патĕнчех сывлани, сывлăша шăршлани – чирлессе.
- Чир иртет-и е çук-и – çакна та калать кушак. Ăна асапланакан çын çумне вырттарсан чĕр чун тармарĕ, кĕлетке çумне тĕршĕнчĕ тĕк – чир кĕçех иртет.
- Хура кушак çула татни ăнăçсăрлăха пĕлтернине кашниех чухлать тĕр...

«ХЫПАР» Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИПЕ МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, “ХЫПАР” ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ” АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор– тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ

Чăваш ХĔРАРĂМĔ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – М.Р.ТУМАЛАНОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службi 2013 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ:
428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, 6 хут, “Чăваш хĕрарăмĕ”
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:
55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почти: hypar@chtts.ru

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **“Аталану çулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 21 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă,
«Чăваш Ен» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 8652. Заказ 4294.